# Тимĕр хӳме хыçĕнчи çуртсен хуçисене мĕн кĕтет? • 4 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

20(890) №, 2015, çу/май, 30

Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

• Çуркуннешĕн тунсăхланипе... тĕрмерен тухса тарнă. 2 стр.
• Лайăх пурăнни япăх-шим? 3 стр.
• Чăваш хушшинче хĕрарăма хисеплекен арçын пурах. 5 стр.
• Ясар "режиссер"... 6 стр.

## Хаклă туссем, хисеплĕ ентешĕмсем! Сире Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!

Çак уяв – чи ырă та çутă праçниксенчен пĕри. Ачасем – пирĕн телей, пирĕн савăнăç тата тĕп пуянлăх.

Ашшĕ-амăшĕ тата общество çитĕнекен ăрăва лайăх пĕлӳ парас, пĕчĕкренех сывă пурнăç йĕркине хăнăхтарас, ачасене тӳрĕ чунлă та ырă кăмăллă пулма, вĕсене ĕçе юратма тата хăйсене йĕркеллĕ тытма вĕрентес, çĕршыва тивĕçлĕ граждансем туса ӳстерес тесе тăрăшаççĕ.

Чăваш Республикинче çакна пурнăçламалли майсем тивĕçлĕ шайра йĕркеленеççĕ: çĕнĕ вĕренӳ учрежденийĕсемпе спорт объекчĕсем çĕкленеççĕ, педагогика кадрĕсен ăсталăхĕ ӳсет, вĕренӳ тата медицина енĕпе паракан пулăшу ĕçĕсен пахалăхĕ лайăхланать, патриотизм воспитанине пысăк тимлĕх уйăратпăр.

Пирĕн ачасем – питĕ пултаруллă та ăнăçуллă, вĕсем республика ятне тĕрлĕ олимпиадăра, конкурссемпе ăмăртусенче тивĕçлипе хӳтĕлеççĕ, лайăх кăтартусемпе савăнтараççĕ.

Пĕлтĕр Чăваш Енри хуласенчи 6 шкул Раççейри чи лайăх пилĕкçĕр шкул шутне кĕнĕ, тата пиллĕкĕшĕ çĕршыври яллă вырăнти чи лайăх шкулсен йышне кĕме тивĕçнĕ.

Чăвашсен ваттисен сăмахĕ «Тĕшĕ тымара пăхать» тесе вĕрентет. Ача мĕнлерех лару-тăрура çитĕннинчен чăннипех те нумай килет. Вăл сывă та çирĕп çемьере, юратупа евĕклĕх хуçаланакан кил-йышра ӳссе çитĕнни питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ, çавăнпа та Чăваш Енре çемье институтне çирĕплетес тĕллевпе чылай ĕç тăватпăр.

Нумай ачаллă çемьесен шучĕ çулсерен хушăнса пырать. Паян республикăра çавнашкал 10 пин ытла çемье пурăнать, вĕсенче 33 пин ытла ача çитĕнет. Чăннипе – кашни 15-мĕш çемье виçĕ е ытларах ача пăхса ӳстерет тата çакă йĕркене кĕрсе пырать!

Юлашки пилĕк çулта республикăра ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлнисене хăйсем патне пурăнма илнĕ çемьесенче çитĕнекен ачасен шучĕ палăрмаллах ӳсрĕ, апла пулсан ача çурчĕсенче, пепкесен çурчĕсенче тата интернат шкулсенче çитĕнекен ачасен йышĕ виçĕ хут чакнă. Паянхи кун пирĕн республикăра 2300 ытла çемьере 3000 яхăн усрав ача çитĕнет. Эпир кашни ачах хăйне юратнине, уншăн тăрăшнине тата ăна хӳтĕленине туллин туйса тăмалли майсене пурне те тума тăрăшăпăр.

Çак хӳхĕм уявра ачасене çĕнĕ çитĕнӳсемпе ăнăçусем, çемьере тăнăçлăх, телей тата юрату сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

## Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 30.05 | +30 | +20 |
| 31.05 | +27 | +20 |
| 01.06 | +24 | +17 |
| 02.06 | +24 | +15 |
| 03.06 | +24 | +16 |
| 04.06 | +23 | +13 |
| 05.06 | +23 | +15 |

# Унран тивлет илет чăваш






**Чăваш Республикинче Константин Иванов çулталăкне халалласа поэт ячĕпе конференцисем, куравсем, акцисем, тĕлпулусем, "çавра сĕтелсем" йĕркелеççĕ, кĕнекесем пичетлеççĕ. Вăл çырса хăварнă йĕркесем вун-вун чĕлхепе янăраççĕ. Эпир чăваш литературин никĕслевçи çинчен ачаранпах пĕлетпĕр, сăвă йĕркисенчи сăнарсене тишкеретпĕр, несĕлĕмĕрсен йăли-йĕркине ăша хыватпăр.**

### Вилĕмсĕр йĕркесем

Çак кунсенче вилĕмсĕр "Нарспи" авторĕ çуралнăранпа 125 çул çитрĕ. Сумлă уява паллă тумашкăн хăнăхнă йăлапа поэтăн Шупашкарти палăкĕ умне пуçтарăнтăмăр. Чăваш тумĕллĕ çамрăксем юрлас, ташлас, сăвă вулас ăсталăхĕпе кăмăла çĕклерĕç.

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Константин Ивановăн ĕçĕсем паянхи ăрăва тĕрĕс воспитани пама пулăшни çинче чарăнса тăчĕ. Çĕнĕ çыхăнусем йĕркелеме май туса панăшăн, чăваш халăхне яланах ăшпиллĕ кĕтсе илнĕшĕн Пушкăртстан Пуçлăхне Рустэм Хамитова тав турĕ вăл. Кăçал та Слакпуç тăрăхне пысăк делегаци тухса кайрĕ. Ентешĕн уявне паллă тумашкăн Пушкăртстан чăвашĕсем те килсе çитрĕç. Апла тăк туслăх çыхăнăвĕ çулсеренех çирĕпленсе пырать.

"Константин Ивановăн чапĕ пирĕншĕн çав тери пĕлтерĕшлĕ", – терĕ Чăваш халăх поэчĕ Валери Туркай. Улăпсене – Çеçпĕл Мишшине, Иван Яковлева, Константин Иванова – пуç тайма, хисеп тума ытларах халăх пуçтарăнмалли пирки каламасăр чăтаймарĕ вăл. Унпа мăнаçланнине пирĕн, хальхи ăрун, ĕçпе çирĕплетмелле. Констанин Ивановăн палăкне Мускавра лартас ыйтăва та çĕклерĕ Валерий Владимирович.

"Паян маншăн хамăн çуралнă кун пекех. Сумлă çак уявпа юлташсем – тĕнчипе паллă поэтсем – иртенпех шăнкăравласа саламлаççĕ", – терĕ Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Раиса Сарпи. Константин Иванов пурнăçа ахаль ирттерменнине, чăваш унран тивлет илнине сăвăра палăртрĕ хĕрарăм.

АСТĂВĂМ

# Унран тивлет илет чăваш, е

## Мĕншĕн эпир Константин Иванова тĕнче классикĕсен – Данте, Шекспир, Пушкин – шайне çĕклеме именетпĕр?

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.**

"Эпир çак самантра мĕншĕн пĕрле?" – сăмах илчĕ Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ художникĕ Праски Витти. Мĕншĕн тесен пирĕн чĕресенче Константин Ивановăн пултарулăхĕ йĕр хăварнă. Унăн ăсталăхĕ вĕрентекенсемпе критиксене кăна мар, художниксене те кăсăклантарни тавра калаçу пуçарчĕ Виталий Петрович. "Радуга" курав центрĕнче унăн ĕçĕсемпе паллашма пулать. Нарспие, Сетнере, Тăхтамана сăнланă картинăсемпе Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесне кăна мар, Америкăна та, Индие те, Германие те, Францие те... çитнĕ вăл. Унăн ĕçĕсенче чăвашлăх тĕп вырăн йышăннине те палăртса хăварас килет. "Нивушлĕ çакнашкал халăх та пур" – ахальтен мар унăн картинисене тишкерсен тĕлĕннĕ нимĕçсем.

Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Лидия Филиппова калашле, Константин Ивановăн пурнăçĕ – поэзи те, трагеди те. "Нарспи" поэма иртнĕ тапхăрти чăваш пурнăçне сăнлакан энциклопедипе танлашнине палăртрĕ вăл. Унăн шухăшĕпе, Константин Ивановăн Пушкăртстанри палăкĕ патне халăх пехил илме пырать.

Чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенĕсем шкул ачисемпе пĕрле литература каçĕсем, ӳкерчĕксен конкурсĕсем, викторинăсем йĕркелени çинчен каласа кăтартрĕç. Çавнашкалах Констанин Ивановăн ĕçĕсем çамрăксене сăвă çырма хавхалантарнине палăртрĕç.

### Чĕрĕлĕхпе хавхалану кӳрекен Слакпуç ывăлĕ

К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче вилĕмсĕр "Нарспи" авторне халалланă асăну каçĕ пуçланчĕ.

"Вăл – аслă шухăшлавçă. Кашни çыннăн кăмăлне сăнарлă сăмах витĕмĕпе кăтартма пултарнă вышкайсăр пысăк ăста. Хăйĕн халăхне малашлăх çулне кăтартаканĕ, литература чĕлхине никĕслекенĕ", – терĕ ун пирки Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер. "Нарспи" авторĕн халăхпа чаплă поэт пек тĕлпулса çӳреме те вăхăт çитмен. Куçармалла, çырмалла, чăваш букварĕ валли ӳкермелле, ӳнер академине вĕренме кĕмешкĕн хатĕрленмелле пулнă унăн.

Константин Васильевич çуралнăранпа 100 çул çитнине ЮНЕСКО йышăнăвĕпе Мускавра уявланине аса илчĕ Юрий Семенович. Ун чухне чăваш сăввипе, юрри-ташшипе кĕрленĕ тĕп хула. Авă еплерех чĕрĕлĕхпе хавхалану кӳнĕ тĕнчене Слакпуç ывăлĕ.

"Вăл чăваш чунне никамран лайăх ăнланнă. Усалтан сыхланма хушнă: вăл çири кĕперен те çывăхрах-мĕн. Усалтĕсел кĕмĕл укçа пулса алла кĕресшĕн, юлташăн курăнса пулăшу сĕннĕ пек тăвасшăн. Сиплĕ шĕвек евĕр курăнса çăвар патне çывхарасшăн. Анчах укçа та, суя сăмах та, эрех те ырă тăвакан вăйсем мар", – калаçăва тăсать Юрий Сементер.

"Константин Ивановăн ячĕ Дантепе, Шекспирпа, Пушкинпа, Лермонтовпа пĕр шайра. Ăна хисеплесе произведенисем çырнă, палăксем хăпартнă, музейсем уçнă. Юбилей мероприятийĕсене Чăваш академи драма театрĕнче йĕркелени те ахальтен мар. Вăл чăваш литературин классикĕн Константин Ивановăн ячĕпе хисепленет", – терĕ республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев. Тăван халăхăн литература чĕлхи йĕркеленсе кăна пынă вăхăтра Слакпуç чăвашĕ пурте ăнланмалла çырнинчен тĕлĕннине пытармарĕ вăл. Унăн произведенийĕсем шухăш-туйăм пуянлăхĕпе, сăнар ăсталăхĕпе палăрса тăнине çирĕплетсе каларĕ.

Михаил Васильевич Петĕр Хусанкайăн аса илĕвне илсе кăтартрĕ. "Нарспи" поэма Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче те чăвашсене тăшманпа çапăçма хăват парса тăнă. Сăмах май, Петр Петрович Сетнерпе Нарспие Ромеопа Джульеттăпа танлаштарнă.

ЧР Патшалăх Канашĕн ертӳçи Юрий Попов хăйĕн сăмахне "Нарспи" поэма йĕркисенчен пуçларĕ. Константин Иванов пире туслă пурăнма халалласа хăварнине палăртрĕ, Пушкăртстанра хăналаннине аса илчĕ.

Чăваш патшалăх академи драма театрĕн артисчĕсем Николай Полоруссов-Шелепи, Петĕр Хусанкай, Çемен Элкер, Митта Ваçлейĕ, Ваçлей Давыдов-Анатри, Георгий Ефимов тата ыттисем Константин Иванов çинчен çырнисен сыпăкĕсемпе тыткăнларĕç. РСФСР халăх артистки Нина Григорьева Нарспие çаврăнса сцена çине тухрĕ.

Пушкăртстан культура министрĕн пĕрремĕш çумĕ Валентина Латыпова чăвашсем кăна мар, республикăра тĕпленнĕ 160 наци çынни Константин Ивановăн пултарулăхĕпе мăнаçланни çинчен каларĕ, Рустэм Хамитовăн салам çырăвне вуласа пачĕ.

Асăну каçне ачасем, çамрăксем, пултарулăх ушкăнĕсем хутшăнчĕç. Уява килнисене Константин Ивановăн "Нарспи" кĕнекине валеçсе пачĕç. Ăна Праски Виттин картинисемпе илемлетнĕ.







● ПРАСКИ ВИТТИ ĔÇĔСЕМ.

ПРЕМЬЕРА

# Çуркуннешĕн тунсăхласа...

Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕ Василий Шукшин ĕçĕсем тăрăх малтан та спектакльсем кăтартнă. Хальхинче Дмитрий Петров режиссер "Хозяин бани и огорода", "Микроскоп", "Степка" калавĕсене пĕр çĕре пуçтарса хатĕрленĕ. "Покажите мне весну" ĕçе куракансем ăшшăн йышăнчĕç. Ялти пурнăç, кивелмен ыйтусем, йĕри-таврари сăнарсем чуна витереççĕ.

Степка тĕрмерен тарнă. Ирĕке тухасси виçĕ уйăх кăна юлнă унăн. Çуркунне шăршишĕн, тăвансемшĕн, ял-йышшăн тунсăхланăскер ыранхи пирки шухăшланă-ши? Унашкаллине вырăнти йĕрке хуралçи те курман. Авă еплерех хаклă çамрăкшăн тăван тăрăх...

"Василий Шукшинăн калавĕсем халăха та, театра та çывăх. Халĕ çынлăх йĕрки хыçа юлчĕ, укçа пуç пулса тăчĕ. Чун илемĕ çинчен те сахал калаçатпăр. Ыранхи кунпа пурăнмалла теççĕ. Çав вăхăтрах паянхи çинчен те манмалла мар. Ачасене нушалантарса тенкĕ çумне пус хушма кирлех-ши?

Степка тĕрĕс тунă-и, çук-и – калама йывăр. Çуркунне илемĕпе киленсе юлаймасан çулталăк кая юлнăн туйăнать. Çынсене ырă сунмалла, лайăх пурăнма васкамалла. Аттеаннене çак самантра ăшă сăмахсем калама ĕлкĕрмелле. Степка кӳршĕ-арша пĕр сĕтел хушшине пуçтарать, уяв туса парать. Паллах, ăна каллех тĕрмене хупĕç, тарнăшăн икĕ çул хушса парĕç. Вăл йăлтах чăтса ирттерĕ. Уншăн вăхăтра юратса, юрласа юласси пĕлтерĕшлĕ", – çирĕплетет режиссер.



Надежда АНДРЕЕВА
сăнӳкерчĕкĕ.

КĔСКЕН

### Иртнине вăхăт та хуплаймĕ

Çĕнĕ Шупашкар библиотекисенче чăваш классикне Константин Иванова халалласа Асăну эрни иртнĕ.

Мероприятие "Чĕрĕ астăвăма вăхăт та хуплаймĕ..." акципе уçнă. Кашни вулавăшра мемориал кĕтесĕсем хатĕрленĕ. Унта Констанин Иванов сăввисемлĕ флаерсем вырнаçтарнă. Библиотекарьсем 600 ытла вулакана Константин Ивановăн поэзийĕпе кăсăклантарма май тупнă. Çĕнĕ Шупашкар çыннисем киле 1200 флаер илсе кайнă.

Ача-пăча тата çамрăксен библиотекин ĕçченĕсем "Чăваш литературин классикĕ К.В.Иванов çинчен мĕн пĕлетĕр?" ыйтăм ирттернĕ. Ку ĕçе хутшăнакансем унăн ячĕ вилĕмсĕр "Нарспи" поэмăпа çыхăннине палăртнă. Шел те, унăн ытти сăввине халăх пĕлсех каймасть иккен.

### Нарспи çинчен

Канашри çемье вулавĕн библиотекинче 6-мĕш вăтам шкул вĕренекенĕсем валли "Чăваш позийĕн генийĕ" литература сехечĕ йĕркеленĕ.

Галина Игнатьева пуçлăх вĕренекенсене Констанин Васильевичăн пултарулăхĕпе паллаштарнă. "Нарспи" поэма витĕмĕпе шăрçаланнă Петĕр Хусанкайăн, Ухсай Яккăвĕн сăввисене вуланă. Поэмăна ӳкерсе илемлетнĕ Элли Юрьев, Алексей Мясников, Анатолий Миттов, Петр Сизов, Федор Быков художниксем çинчен калаçнă, вĕсен ĕçĕсене тишкернĕ. Ачасене "Нарспи" кĕнеке тăрăх хатĕрленĕ буктрейлер кăтартнă.

### Чăвашла мюзикл

Шупашкарти ача-пăча пултарулăх çурчĕн "Асамат кĕперĕн тĕнчи" пĕрлешĕвĕн вĕрентекенĕсем "Салют" культура керменĕнче Константин Иванов ĕçĕсем тăрăх мюзикл кăтартнă. Чăвашла шăкăл-шăкăл калаçакан çамрăк артистсене куракансем тăвăллăн алă çупса йышăннă.

ЧР Вĕрентӳ тата Культура министерствисем мюзикл сценарине кĕнекен пичетлесе кăларма сĕннĕ.

**Страницăна Марина ГРИГОРЬЕВА хатĕрленĕ.**





ТĔЛПУЛУ

# Туслă çыхăнăва çирĕплетесшĕн

**Тунтикун Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Правительство çуртĕнче Молдави Республикин Парламенчĕн XX созывĕн депутачĕсене Игорь Додона тата Андрей Негуца-на йышăннă. Тĕлпулăва ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин тата экономика аталанăвĕпе промышленноç тата суту-илÿ министрĕ Владимир Аврелькин хутшăннă.**

Михаил Васильевич Молдавипе пирĕн республика хушшинчи хутшăнусем, уйрă-мах ялхуçалăх енĕпе, лайăх пулнине палăртнă. Акă Вăрнарти «Август» фирма унти çĕр ĕçченĕсене ÿсен-тăрана хÿтĕле-кен хатĕрпе тивĕçтерет, вĕсем пире – исĕм çырлипе.

– Туслă çыхăнăва малашне те лайăх-латма пирĕн майсем пур, – тенĕ Михаил Игнатьев. – Сирĕн халăх – пысăк йышлă. Пирĕн пĕр тăваткал километрта – 68, сирĕн 111 çын пурăнать. Килччĕр пирĕн пата инвесторсем. Вĕсем кирек хăш хутлăхра та ĕçлеме пултараççĕ. Пирĕн çĕр айĕнче пурлăх çук, тĕп пуянлăх – ĕçчен халăх. Палăртма кă-мăллă: Чăваш Республики Раççей реги-онĕсен хушшинче инвестици аталанăвĕ-пе Мускавпа Санкт-Петербурга, Тутар-станпа Калуга облаçне хыçа хăварса 5-мĕш вырăн йышăнчĕ.

Молдави Республикипе Игорь Додон паллаштарнă. Молдави – Европа тата НППП чи чухăн çĕршывĕсенчен пĕри. Унта исĕм çырли, пахчаçимĕçпе улма-çырла туса илесси лайăх аталаннă. Электротехника, металлурги, çăмăл апат-çимĕç, ытти промышленноç ĕçлет.

Суту-илÿпе экономика тĕлĕшĕнчен пирĕн çĕршыв Молдавишĕн ертсе пыра-кан ĕçтеш шутланать. Экспортра унăн пайĕ – 26,3 процент, импортра 14,3 процент йышăнать. 2013 çулта пĕрлехи суту-илÿ калăпăшĕ 1,7 млрд доллара, ют çĕршывсем хывакан укçа-тенкĕ калăпă-шĕнче Раççей инвестицийĕ 22 процента çитнĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**

# Малтанхи сасăлава хутшăннă

**«Единая Россия» партин регион уйрăмĕ вицĕмкун Шу-пашкар хулин депутачĕсен сентябрь уйăхĕнчи суйлавне хутшăнма кандидатсем палăртас тĕллевпе суйлав умĕн-хи сасăлавне /праймериз/ ирттернĕ. Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев П.Хусанкай ячĕллĕ культура керменĕнчи суйлав участокĕнче алла бюллетень илнĕ.**

Журналистсен ыйтăвĕ-сене хуравласа Михаил Васильевич Чăваш Енре праймеризăн пĕрремĕш модельне сăнаса пăхнине палăртнă. Ку мел суйлав-çăсене хăйсен политикăри кăмăл-туйăмне пăхмасăр ку е вăл кандидат пирки шухăш-кăмăлне уççăн па-лăртма май парать. Вăл çавăнпа пĕрлех Чăваш Республикин Патшалăх Ка-нашĕ июнь уйăхĕн 11-мĕшĕнче Чăваш Республи-кин Пуçлăхĕн суйлавĕ хă-çан пуласси çинчен йышă-ну каларасси çинчен ыс-парланă. «2015 çулхи сен-тябрь уйăхĕн 13-мĕшĕнчи суйлав Чăваш Республикин Конституцийĕпе, суйлав саккунĕсен нормисемпе килĕшÿллĕн иртессе шана-тăп. Республика Пуçлăхĕ пулнă май эпĕ кандидат-сен хушшинче таса кĕреш-ĕве, суйлавăн уççăнлăхне, унăн тупăшăвне, легитим-ноçне йĕркелеме тивĕçлĕ», – тенĕ Михаил Игнатьев.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ уча-стока килнĕ хула халăхĕпе тĕл пулса калаçнă. Вăл суйлав участокне чылай-ăшĕ çемйисемпе килнине ырласа палăртнă: «Шупаш-карта экономикăпа, пурнăç йĕркеленĕвĕн ыйтăвĕсем-пе çеç мар, политикăпа та кăсăкланакан çын нумай пулни пире савăнтарать».

**А.СТЕПНОВ.**

ПĔТĔМЛЕТÿ

# Кинофестиваль уява çаврăнчĕ

**Шупашкарти сахал йышлă халăхсен кинематографине халалланă Пĕтĕм тĕнчери VIII кинофестиваль пирĕн тăрăхри халăхшăн чăн-чăн уява çаврăнчĕ. Çак вăхăтра пурĕ тÿлевсĕр 56 фильм курма май килчĕ. Режиссерсемпе артистсем тĕлпулусем йĕрке-лерĕç. Кинофестивальпе çыхăннă 110 мероприятие 20 пине яхăн çын хутшăнчĕ.**

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пирĕн тăрăхра кăтартнă фильмсем çамрăк ăрăва тĕрĕс воспитани пама пулăшни тата режиссерсен, артистсен витĕмĕпе хамăр çĕршыва, ашшĕ-амăшне юратакан, аслисене хисеплекен ачасем çитĕнтерме май килни çинчен каларĕ.

Искусствăри гражданлăха, патриотлă-ха сăнлакан кинокартинăсем ÿкернĕшĕн Чăваш Ен Пуçлăхĕн ятарлă парнине «Белая белая ночь» ĕç режиссерĕ Рамиль Салахутдинов тивĕçрĕ. Михаил Васильевич ăна «Чувашия» санаторире канмашкăн путевкăпа хавхалантарчĕ. Питĕрте ÿкернĕ илемлĕ фильмпа вула-кана иртнĕ номерте паллаштарăччĕ. Прессăн ятарлă парнине те çак кинокар-тинах çĕнсе илчĕ.

Сахал йышлă халăхсен фильмĕсен конкурсĕнче жюрин ятарлă дипломĕсемпе çак ĕçсене чысларĕç: «Айсылу» фильм /Рустам Рашитов, Татарстан/ – чи лайăх дебютшăн, «Хорло» фильмри Рузалия Зайнуллина /Марат Никитин, Чăваш Ен/ – паянхи хĕрарăмăн сăнарне философилле кăтартнăшăн, «Пусть ветер унесет мои слова» кинокартинăри Юлия Галяутдинова /Айнур Аскаров, Пушкăртстан/ – амăшĕн сăнарне хăйнеевĕрлĕ калăпланăшăн.

Чи лайăх сценаришĕн Шаура Шакуро-ва /«Пусть ветер унесет мои слова» фильм/ парне илчĕ. «Чи лайăх режиссу-ра» номинацире Марат Никитин /«Хорло» фильм/ çĕнтерчĕ. Чи лайăх оператор ĕçĕшĕн Батор Цыбиков тата Сергей Жапов /«Живи», Бурят Республики/ хисе-пе тивĕçрĕç. «Чи лайăх актер ĕçĕ» номинацире Ростислав Григорьев /«Ку-ратор», Чăваш Ен/ палăрчĕ. Вăл хальхи вĕрентекенĕн сăнарне уçса парать. Çам-рăксене тĕрлĕ ĕçпе кăсăклантарма пĕлет.

Гран-прие Нигина Сайфуллаевăн «Как меня зовут» фильмĕ тата Степан Бурна-шевăн «Первая любовь» ĕçĕ тивĕçрĕç. Вера Глаголевăн «Две женщины» кино-картини куракансен кăмăлне кайнă. Ин-тернет-блогерсем «Как меня зовут» ки-ноĕçе килĕштернине палăртрĕç.

Шупашкар хăнисем куракансем çак-нашкал мероприяти кирлине туйни çин-чен сăмах пуçарчĕç, кинофестиваль туслă, тăванла халăхсен уявĕ пулнине па-лăртрĕç. Йĕркелÿçĕсем малашне те про-граммăна тивĕçлĕ фильмсем кĕртме шантарчĕç.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Лайăх пурăнни япăх-им?

**Маргарита ИЛЬИНА**

**Çĕршывăмăр капитализм çулне суй-ласа пасар экономикине аталантарма пуçланăранпа шыв-шур самай юхса иртрĕ. Пурнăç тĕлĕнмелле улшăнчĕ унтанпа. 90-мĕш çулсене те чăтса ир-ттертĕмĕр. Чăн та, масарсем вăй пит-ти арçынсен ÿчĕсемпе тулчĕç вăл вă-хăтра. Телее, криминал хавшарĕ, сак-кунлăх вăй илчĕ. Унпа пĕрлех коопе-ративсем аталанчĕç – предпринима-тельлĕхе шăпах вĕсем çул уçса пачĕç-çке. Саккун картине çирĕпрех хупас, унпа пĕрлех пуçарулла та çаврăнă-çулла çынсене пулăшас тĕллевпе пат-шалăх та тăрăшать. 1987 çулхи çу уй-ăхĕн 26-мĕшĕнче "Кооперативсем çинчен" саккун йышăнчĕç. Раççейре шăпах çавăнтанпа паллă тăватпăр та Предпринимательсен кунне.**

**Мал ĕмĕтлĕ çынсене ĕçлеме паян тем тесен те çăмăлрах. Ĕмĕчĕ-шухăш-не пурнăçланă май енчĕкĕ те хулăн-ланса пырать тата. Эпир вара ют кĕсьери укçана шутлама ай-ай! Юра-татпăр! Çав хушăрах хăй ĕçне пуçарнă çыннăн ыйхăсăр каçĕсене, канма пĕлмесĕр тăрăшнине кам та пулин асăрхать-и?**

**...Пуçлăх пурччĕ пĕрескер. Темшĕн "çăлтăрсене" килĕштерсех кай-мастчĕ. Вĕсем супермашинăсемпе çÿреççĕ, чаплă кÿрдсенче пурă-наççĕ имĕш. Коллектив мĕн çисе-ĕçсе пурăннине те пĕлмен, анчах хăй çав хушăрах уйăхсерен çĕршер пин шалу илекен пуçлăхпа танлаштарсан çав "çăлтăрсем" çĕрне-кунне пĕлмесĕр тар юхтараççĕ вĕт. Калăпăр, хăйне хисеплекен юрăç куракан умне пасар халатне тăхăнса тухмасть. Концерт кĕпин хакĕ сахалтан та 10 пин тенкĕ-пе танлашать. Пĕр юрă çырмашкăн 7 пин тенкĕ кирлех. Альбом кăларас те-сен 60-70 пин тенкĕ кăларса хума ти-вет. /Ку укçапа вара, вĕренес тĕллев-пе, çĕтĕк машина туянма пулать/. Çапла, сцена пурнăçĕ илемлĕ, йăл-тăр-ялтăр, чечек айĕнче... Анчах та чаршав хыçĕнчи тăкаксене, шыв айĕ-нчи чулсене шута илсен ăмсанмалли-ех çук-тăр. Çук, йăнăшатăп, пур ăмсанмалли – чап, суперçурт, ют çĕршывра кăларнă машина... Анчах та çакăн патне çитичченхи мĕн чухлĕ тар тăкмаллине шухăшлатăн та... Шăпах çакă – пĕрремĕш утăм – хăратать те нумайăшне хăйĕн ĕçне йĕркелеме.**

**Кам ăçта ĕçлет – çавăнта тăранса пурăнать текен каларăш пурччĕ ĕлĕкрех. Халĕ вăл пуçлăхсемшĕн кăна тÿрре тухнă пек туйăнать. Ахаль çын-нăн пĕр вырăнта ĕçленипе кăна ала-ура çаврăрса яма ниепле те май çук паян. Темиçе вырăнта пилĕк авсан вара çеме валли вăхăт та, вăй та юл-масть. Аптриш... "Кам ăçта пурăнать" тесе кăштах улăштарас килет вара çак каларăша. Ара, ял çынни те малаллах туртăнать-çке. Патшалăх хавхалантар-нипе – пулăшма çапах та шантараççĕ-çке – хайхи капитализм çулĕпе утма нумайăшĕ хăтланса пăхрĕ пĕр вăхăт. Шел, хресчен-фермер хуçалăхĕсем пĕрин хыççăн тепри арканчĕç. Пулăшу кĕтсе илеймерĕç, пăвакан налуксене чăтаймарĕç... Паллах, çăмăл пуласса никам та шантарман, анчах та çĕр çинче ĕçлесе патшалăх пулăшăвĕсĕр аталанма – пуйма – пулать-и вара? Тĕлĕнмелле те, "пуян" сăмах халĕ те пирĕн обществăра ырă мар пĕлтерĕш-пе сарălнă. Пуйни начар-им-ха? Халăх лайăх пурăнни япăх-им? Анчах та пуян-ни халăх мар çав, уйрăм çынсем кăна. Çавăнпах чаплă пурăнакансем çине ча-лăшшăн пăхма пăрахаймастпăр та.**

**Ял çыннишĕн çывăхрах ыйтăва хус-катса сĕт пухакансем пирки сăмах хус-катас килет. Юлашки вăхăтра вĕсене ытларах сăмах тивни сисĕнме пуçларĕ. Сăмахĕ каллех çав ретренех – кĕске вăхăтрах чаплă машинăсемпе çÿреме пуçлаççĕ... Ăнăçтарас çук, çĕтĕк урха-махран чапли çине куçса ларас çук, каçарăр та, мĕншĕн кÿлĕнмелле апла тăк йывăр çак лава? Кирек мĕне пике-несси – теветкеллĕ утăм. Çак ĕçе пу-çăнмашкăн вара машина та кирлĕ, тĕрĕслекен те нумай, конкуренци те пысăк /сĕтрен криминал шăрши çапма пуçланине республика Пуçлăхĕ хăй те каланăччĕ-ха/. Йывăрлăхĕ мĕн чухлĕ! Ял халăхне вара, сĕте килех тенĕ пек пырса илсе кайнине кура, аван вĕт-ха: чĕрĕ укçа алла кĕрет. Калаçтараканни, паллах, сĕт хакĕ – ăна çынсенчен йÿнĕпе туянаççĕ, уйрăмах – çулла. Предпринимательсене, эх, лекет вара хака чакарнăшăн. Вăт çакă тĕлĕнтерет те, тавлаштарать те. Йÿнĕпе туянса хаклăрах сутма патшалăх хăех вĕрент-мерĕ-и-ха? Ĕлĕк çакна, чăн та, спеку-ляци тетчĕç. Халĕ ура çине тăнисенчен чылайăшĕ шăпах çапла майпа сывлăш çаварса ячĕ. Патшалăх чĕнмесĕр тăнă чух завод-фабрика хупăна-хупăна пĕтрĕ, бюджетниксене уйăхĕ-уйăхĕпе шалу тÿлеместчĕç. Халăхăн пĕр пайĕ ирĕксĕрех предпринимателе çаврăнчĕ ун чухне, чăн та, çапла майпа çемйине выçă ларасран çăлса хăварчĕ. Майĕ-пен ура çине те тăчĕ. Çак тапхăрта мĕн чухлĕ хĕрарăмăн сывлăхĕ пĕтрĕ – па-сар экономики, кирек мĕн калăр та, вĕсен черчен хулпуççийĕ çинче пуç-ланчĕ. Ачисене киле хупа-хупа хăварса Мускава е тата аякkарах кайма тивни-не пула вĕсемшĕн куляннипе мĕн чухлĕ куççуль юхрĕ. Çакна хăйсем тÿссе кур-нисем кăна пĕлеççĕ. Çапла çĕкленчĕç хайхи хăтлă керменсем...**

**Ял патшалăх пулăшмасăр аталанай-масси паллă. Апла тăк пĕтĕм хăюлăхне пухса çавăрăнкалама тăрăшакансене вăрçиччен патшалăхăн ытларах тĕрев-лемелле мар-ши яла? Ялхуçалăх пĕтĕм тĕнчипех дотациллĕ отрасль шутла-нать. Америка фермерĕсем те çапла кăна ăнăçтараççĕ. Польша пахчаçи-сем те ирнĕ кĕркунне Раççей енне хă-яккăн пăха-пăхах хăйсен ертÿçисен-чен пулăшу тилмĕрсе ыйтрĕç. Пирĕн те çĕр ĕçченĕпе, вылăх усракана тимлĕрех пуласчĕ. Сĕт пуçтаракан-сем-и? Вĕсене ятлама епле хăйăн? Епле пулсан та хĕвелтен маларах тăр-са ĕçе пикенеççĕ вĕт-ха. Вĕсен гай-кисене те пăрсах лартсан халăх сĕтпе каллех сыснана кăна тăрантарас хă-рушлăх пур /ĕнине те, сыснине те ус-ракан та сахалланса пырать-ха.../. Паллах, ку енĕпе те йĕрке пулмаллах. Анчах сĕт пуçтаракансен ĕçне кăна мар, тирпейлекен промышленноçри-не те, суту-илÿрине те тишкерсен аван пулмалла – хăш сыпăкра çĕрпе çинчи пек хăпарать хак? Мĕншĕн халăхран 13-15 тенкĕпе пуçтарса сентре çине тепĕр чух 45 тенке çитсе тухса вырă-тать? Манăн шухăшпа, кунта пĕрне ыр-ласа теприне хурлама çук. Вылăх ус-ракана предприниматель кĕсйинчен кăна пулăшма тăрăшни çапах та тĕрĕсех пек туйăнмасть.**

ЭПИР ÇЫРНĂЧЧĔ



# Хӳме леш енчи шăв-шав Мускава çитрĕ

**Шупашкарти Мясокомбинат тăкăрлăкĕнчи лару-тăрăва пирĕн хаçат çутатсах тăрать. Унта пурăнакансем 2012 çултах пулăшу ыйтса редакци ячĕпе çыру янăччĕ. Маларах "поселок" тенĕ çак вырăнта тĕрлĕ предприятире вăй хуракансем 40 çула яхăн пурăннине влаç çыннисем пĕлеççĕ паллах. Анчах кунта тĕпленнисен нимĕнле ирĕк те çук. Çакăнти халăх пус çумне пус хушса çĕкленĕ кермен пек çуртсене ниепле те харпăрлăха куçараймасть. Пĕччен-шерĕн те, ушкăнăн-ушкăнăн та тĕрлĕ инстанцие çитни усă кӳмен ырă малашлăха ĕненекенсене.**

### Ăçта куçмалла?

Висĕ çул каялла "Шанхай" лаптăкне гаражсенчен тасатма пуçларĕç. Кунти пӳртсем вырăнне нумай хутлă çуртсем хăпартма йышăннине пĕлсен çынсен канлĕхĕ çухалнă. Хăш тĕле куçмалла вĕсен? Хӳтлĕх шыраса ăçта каймалла? "Сирĕн урлă хула администрацийĕ те, тен, йĕркеллĕ хурав парĕ. Çавăнпах вĕсен ячĕпе хатĕрленĕ çырăва та сирех ярса паратпăр", – хăш-пĕр йĕркепе вулакана çĕнĕрен паллаштарас килет.

Ун чухнехи лару-тăрăва хула администрацийĕ вăрттăнлăхра тытни "Шанхай" çыннисене те, массăллă информаци хатĕрĕсенче ĕçлекенсене те тĕлĕнтерет. Чăнах, çак лаптăкри çуртсене мĕншĕн Шупашкар карттине кĕртмен? Халăха урăх çĕре /хĕсĕк пӳлĕмсене/ куçарас тĕллевпе строительство организацийĕ список хатĕрлеме пуçлани те ăнланмалăх çуратрĕ. Çынсем влаç органĕсенчен уçăмлăх кĕтрĕç.

### Çаврăнакан кустăрмари пекех

Эпир ыйтăва хуравсăр хăварма хăнăхман. Çийĕнчех Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков патне çыру вĕçтертĕмĕр.

"Шупашкар Хула депутачĕсен Пухăвĕ 2004 çулхи раштавăн 8-мĕшĕнче тата 2005 çулхи утă уйăхĕн 14-мĕшĕнче çирĕплетнĕ Шупашкар тĕп планĕпе, çĕрпе усă курмалли тата çурт çĕклемелли йĕркепе килĕшӳллĕн çак лаптăк промышленноç предприятисен санитарипе хӳтлĕх зони шутланать. Унта уйрăм çурт хăпартма юрамасть", – Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Александр Анисимов алă пуснă çыру йĕркисене вуласан ахалех шăв-шав çĕкленнĕн туйăнчĕ. Унта пурăнмалли вырăн харпăрлăхçи кăна патшалăх е муниципалитет харпăрлăхĕнчи çĕр лаптăкне приватизацилеме е арендăлама пултарни пирки та каланă официаллă хуравра.

"Чăваш хĕрарăмĕ" хаçат хускатакан çивĕч ыйтусене Республика прокуратури куçран вĕçертмест. Хальхинче те 2012 çулхи утă уйăхĕн 28-мĕшĕнче пичетленнĕ "Шанхай" "партизанĕсем", е Çынсен шăпине кам çырать", – статья тăрăх прокуратура ĕçченĕсем тĕрĕслев йĕркелерĕç.

"Тĕрĕслев çакна палăртрĕ: 2011 çулти раштав уйăхĕнче Шупашкар хула администраци пуçлăхĕн йышăнăвĕпе 19,25 гектар лаптăкра /Эгер бульварĕпе, Ленин комсомолĕн урамĕпе, Машина тăвакансен тăкăрлăкĕпе чикĕленет/ çурт хăпартма ирĕк илмешкĕн аукцион иртнĕ. Унта "Лидер" ООО çĕнтернĕ", – пĕлтерет республикăн прокурор çумĕ Александр Григорьев. Мясокомбинат тăкăрлăкĕнчи хăйсем тĕллĕн çĕкленĕ çуртсенче тĕпленнисене пурăнмалли вырăна саккун йĕркипе харпăрлăха куçарас тĕллевпе суда кайма сĕнет вăл. Çапах та "санитарипе хӳтлĕх зонине" аукционра мĕнле майпа сутнă? Акă тинех тĕрĕслĕх çиеле тухрĕ. Апла тăк мĕншĕн малтан пытарнă? Аукцион ирттерсе çĕре уйрăм организацие сутса янă хыççăн официаллă влаç официаллă хаçата тĕрĕс мар – суя – информаци парать. Ăнланмалла мар...

Çапах ултавшăн хăçан та пулин явап тытма тивесси паллă. Шупашкар хула администрацийĕн архитектура тата хула строительстви енĕпе ĕçлекен пуçлăх çумĕ тĕлĕшĕпе уголовлă ĕç пуçарни куç тĕлне пулчĕ. Ăна ĕç вырăнĕпе усă курса сăтăр тунăшăн тата саккунсăр майпа предпринимателе çаврăннăшăн явап тыттарасшăн. Федерацин следстви комитечĕн Чăваш Енри уйрăмĕн пуçлăхĕн аслă пулăшуçи Олег Дмитриев пĕлтернĕ тăрăх, йĕркене пăсакан 2012 çулхи чӳк уйăхĕнчен пуçласа 2013 çулхи чӳк уйăхĕччен амăшĕ пĕччен учредитель пулнă строительство организацине ертсе пынă.


Редакция газеты «Чăваш хĕрарăмĕ» («Чувашская женщина»)

пр. И. Яковлева, д. 13, г. Чебоксары, Чувашская Республика, 428019

ПРОКУРАТУРА РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ

ПРОКУРАТУРА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОКУРАТУРИ

ул. К.Маркса, 48, г. Чебоксары, 428000

03.09.2012 № 7-49-2012

г. Чебоксары

Прокуратурой республики проведена проверка по опубликованной в газете «Чăваш хĕрарăмĕ» № 29 (743) статье «Шанхай «партизанĕсем».

В ходе проверки установлено, что на основании распоряжения главы администрации г. Чебоксары от 17.10.2011 № 2722-р в декабре 2011 г. проведен аукцион на право заключить договор о развитии застроенной территории площадью 19,25 га, ограниченной улицами Эгерский бульвар, Л. Комсомола, Машиностроительный проезд, р. Малая Кувшинка г. Чебоксары.

По ее результатам администрацией г. Чебок...

«Лидер» заключен договор о разви...

57.

Саккунпа килĕшӳллĕ-и çакă? Çĕр лаптăкне мĕншĕн çакăнта пурăнакансене туянма сĕнмен?

Тĕрĕссипе, "Шанхай" çыннисем ку ĕç вĕçне-хĕрне шыраса хăшкălнă. **Суд çĕр документчĕсем çуккишĕн çурта харпăрлăха памасть, ыйтăва татмашкăн администрацие хăвалать. Администраци çынсен хăйсене ятăн çурт çуккишĕн çĕр уйăрмасть...** Çаврăнса тăракан кустăрмана лекнĕ пекех.

Пĕлтĕр "Лидер" организаци гаражсен вырăнче пĕррремĕш çурт никĕсне ячĕ. Çакăн хыççăн татах Шупашкар хула администрацийĕпе çыхăнма лекрĕ: тен, хаçата хальхинче уçăмлă хурав парĕç? Промышленноç предприятийĕсен санитарипе хӳтлĕх зонинче строительство пуçлама ирĕк пур-и вара? Шупашкар хула администрацийĕн архитектура тата хула строительстви енĕпе ĕçлекен пуçлăх çумĕ Денис Майоров алă пуснă çыруран çакна пĕлтĕмĕр: 19,25 гектар çĕр лаптăк çинче çурт хăпартма пуçласси çинчен администраци 2011 /!/ çулхи раштав уйăхĕн 23-мĕшĕнчех "Лидер" организаципе килĕшӳ тунă. Ку документра палăртнă тăрăх, "Лидерăн" çакăнти çуртсенче пурăнакансене хăтлă кĕтеспе тивĕçтермелле. Пурăнмалли çурт-йĕр кодекс йĕркине пăсма юраманни çине пусăм тунă.

Чиновник Шупашкарăн тĕп пайĕнчи 317 тăваткал метр çĕр лаптăкне саккунсăр майпа микрорайон застройщикĕн харпăрлăхне куçарса хăйĕн амăшĕн фирмине çăмăллăхсен панă. Муниципалитет çĕрĕ çад ăстисен коммерциллĕ мар пĕрлĕхĕн шутланнă. Çак лаптăкра нумай хутлă пилĕк подъездлă çурт хăпартма планланă. Çав вăхăтрах подрядчиксене икĕ подъездлă çурт никĕсĕ яма кăна ирĕк пулнă.

Суд йĕркене пăсаканран 1 миллион тенкĕ салук шыраса илнĕ. Муниципалитет чиновникĕ пире пĕле-тăркач тĕрĕс мар хурав панинчен тĕлĕнме кирлĕ мар апла тăк.

### Çĕнĕ "Шанхай"

"Шанхай" вырăнĕнче çĕкленекен "Кувшинка" микрорайон проектне висĕ çул каяллах пичетленĕччĕ эпир. Унтанпа пая кĕрсе хваттер туянакансен йышĕ те пысăкланса пырать ахăр. 2012 çулта пĕр пӳлĕмре вырнаçнă организаци те юлашки вăхăтра вăй илчĕ. Специалистсем темиçе хутри пӳлĕмсене йышăнчĕç. Çурт-йĕр çĕклекенсен аллине пысăк укça кĕни куçкĕрет.

"Шанхайра" пурăнакансем кăна çаплипех канлĕ çывăрайманççĕ. "Лидер" организацин условийĕсемпе килĕшесшĕн мар кунти халăх. 2-3 хутлă керменсенче тĕпленнисен 33 тăваткал метр лаптăкра мĕнле çаврăнкаламалла?

Акă, тĕслĕхрен, Лукинсенех илер. "Эпир 1982 çултанпах çакăнта пурăнатпăр. Пысăк çуртра 3 çемье валли вырăн çителĕклех", – каласа кăтартать Людмила Ивановна. Карпулинсем вара – çиччĕн. 1990 çулта çакăнта хăтлăх тупнă вĕсем. Харитоновсем пилĕкĕн пурăнаççĕ. Рыбкинсен çемйинче 6 çын прописккăра тăрать...

"Пирĕн çакăнтан куçса тепĕр "Шанхай" уçмалла-и?" – кăмăлсăр калаçать халăх. Вĕсен чун ыратăвне ăнланма пулать. Çынсем пур-çук укçана строительствăна хывнă. Халĕ чылайăшĕн нухрат хушса пысăкрах хваттер илме май çук.

"Çурт хăпартакансем усă куракан кран пирĕн кил тĕлĕнчех çакăнса тăнăн туйăнать", – теççĕ хӳме леш енче пурăнакансем.

Кăçал хула администрацийĕ пылчăк çăрса ывăннă халăха тротуар сарса пама шантарнă. "Ирхине бетон блок тиенĕ машина ларатчĕ. Çав хатĕре урăх тĕллевпе усă курнă ахăр. Пире хăма тротуар сарса панипе çырлахрĕç", – каласа кăтартать Зинаида Ильина. Пăхатăп та, шкултан таврăнакан вĕренекенсем те, ача кӳми тĕксе утакан амăшĕсем те, ĕçрен килекен вăл питтисем те ансăр çак çулпа васкаса утаççĕ. Кайран, ахăртнех, çак вырăна асфальтпа витĕç.

Вырăнти влаç çыннисем питпе çаврăнасса кĕтсе хăшкăлнă халăх çу уйăхĕнче çĕршывăн тĕп хулине çул тытнă...

### Правительство шайĕнче

Çу уйăхĕн 18-мĕшĕнче республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев "Кувшинка" микрорайона аталантарас тĕлĕшпе хула администрацийĕн, право хуралĕн, прокуратурăн, Çурт-йĕр министерствин, "Лидер" организацин ĕçченĕсене, "Шанхайра" тĕпленнисене "çавра сĕтел" хушшине пуçтарчĕ. Микрорайонти строительство ĕçĕ саккунпа килĕшӳллĕн пурнăçланса пынине палăртрĕ вăл.

289 çуртри çемьесене урăх çĕре куçарас ыйтăва çĕклерĕç. Юлашки пĕтĕмлетӳрен çакă паллă: "Лидер" организаци ĕçченĕсем 90 çуртра пурăнакансемпе пĕр чĕлхе тупнă, вĕсенчен 78 çурт хуçипе 10, 10а позицисене пая кĕме килĕшӳ тунă, 13-шĕ укçан компенсаци илме килĕшнĕ. "Шанхай" çыннисем ку статистикăна ĕненесшĕн мар. Хăйсем йĕркеленĕ комисси членĕсем çитес вăхăтрах вĕсенчен кашнинпе курса калаçасшăн. Çакă кунта пурăнман айккинчи çынсене хваттерпе е укçан компенсаципе тивĕçтерессинчен сыхлĕ.

Правительствăра йĕркеленĕ "çавра сĕтел" 5 сехете тăсăлчĕ. Çапах та хăйсем тĕллĕн хăпартнă çуртсенче пурăнакансен, подряд организацийĕн, хула администрацийĕн интересĕсене тĕпе хурса калаçса татăлма çăмăлах мар иккен.

Хула администрацийĕн ĕçченĕсем вăхăтра татса паман ыйту çивĕчленсех пынине палăртрĕ Михаил Васильевич. "Хула влаçĕн лару-тăрăва тишкерсе хирĕç-тăрăва сирмелли май шырамалла пулнă", – терĕ вăл.

Ĕç-пуçа республика Пуçлăхĕ хăй тĕрĕслесе-сăнаса тăма шантарчĕ.

### Çуран...

Алексей Ладыков микрорайонти пĕр çынна та хăй килĕшмесĕр урăх çĕре куçармасси пирки калать.

Çапах çынсене хула администрацийĕпе, строительство организацийĕпе пĕр чĕлхе тупасси иккĕлентерет. Çак эрнере "Шанхайра" тĕпленнисем каллех ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕн Андрей Кулагинăн пӳлĕмĕнче пуçтарăнчĕç. Прописка çуккисене юристсем участок уполномоченнăйĕпе çыхăнма ăс пачĕç.

Ыйту çаплипех татăлмасан çынсем çитес вăхăтра тепĕр хут Мускава кайса килесшĕн. Çула çуран тухасси те хăратмасть вĕсене.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

Автор сăнӳкерчĕкĕ.

**ЧР юстици министрĕ Надежда Прокопьева Шупашкарти Мясокомбинат тăкăрлăкĕнче пурăнакансене çĕртме уйăхĕн 1-5-мĕшĕсенче 17-рен пуçласа 19 сехетчен йышăнĕ. Вăл çуртйĕр правипе çыхăннă ыйтусен хуравне тупма пулăшĕ. Граждансен Президент бульварĕнчи 10-мĕш çуртри 5-мĕш хута пымалла. 62-33-53 телефонпа маларах çырăнма та пулать.**




«Çемье» проект ЧР информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

# Чăваш хушшинче хĕрарăма хисеплекен арçын пурах

**Кăçал Раççейре – Литература, Чăваш Енре Константин Иванов çулталăкĕ пулнă май кĕнеке презентацийĕ тăтăшах иртет. Иртнĕ эрнере çыравçăсен пĕр ушкăнĕ Наци библиотекинче пухăнчĕ. Уяврăн тĕп хăнисем – Элĕк районĕнчи Урасккилтре пурăнакан Ливерипе Анфиса Федоровсем.**



Татьяна НАУМОВА сăнÿкерчĕкĕ.

80 çула çывхараканскерсем нумаях пулмасть... кĕнеке хыççăн кĕнеке кăларма тытăннă. Кĕске вăхăтрах вĕсен шучĕ вунçиччĕпе танлашнă. Пĕрремĕшĕ – «Пурнăç çулĕ» – 2008 çулта кун çути курнă. Каярахпа «Тăван ялăм Урасккилт», «Ырă кун, ял-йыш», «Çул хыççăн çул», «Хĕвел анчĕ ял хыçне», «Кантăкран курăнать шуçăм», «Пĕрле ÿснĕ тусăмсем», «Хамăр ялсем» тата ыттисем пичетленнĕ.

Ялта пурăнаканскерсен хăй вăхăтĕнче роман-повеç çырас шухăш пуçра та пулман. Халĕ вара хăйсен таврашĕнчи тавралăха сăнлакан, ентешĕсен кун-çулĕпе паллаштаракан, ял пурнăçне кăтартакан очерксемпе тĕрленчĕксем, калавсем çыраççĕ ватăсем.

### Халăхра вăй тапать

– Кун пек çынсем пурри халăхра тапса тăракан вăй пуррине пĕлтерет, – пархатарлăн хаклать Федоровсен пултарулăхне ЧР Писательсен союзĕн ертÿçи Юхма Мишши. – Шупашкара килсен пирĕн пата еплерех лекнине те кăсăклăн каласа кăтартать вăл. «Писательсен çуртне çитсе килем терĕм. Автобусран ансан ниçта кайма пĕлменрен инçех мар тăракан икĕ полицейски патне пытăм. Шăпах вĕсем тĕллесе ячĕç те», – тет. Ун чухне 9 кĕнеке кăларнăччĕ Ливерий Васильевичпа Анфиса Лукинична. Мĕн çăмăлпа çÿренине ăнлантарчĕ. Ун чухне мана çакă савăнтарчĕ: «Эпĕ хам пирки шухăшламастăп-ха, арăма чыс тăвасчĕ», – терĕ арçын. Чăваш хушшинче хĕрарăма хисеплесси пурах. Ливерий Васильевич – çакăн пек арçынсенчен пĕри.

Тăван халăх мăшăр пирки калану чухне те «арăмĕпе упăшки» тет. Арăмсене хисеплени çакăнта та палăрать. Вырăсла вара – «упăшкипе арăмĕ».

Икĕ кĕнеке кăларсан союза кĕме ирĕк пур. Çапла Федоровсене те хамăр йыша илтĕмĕр. Питĕ пархатарлă та ырă кăмăллă вĕсем, – лайăх енчен çеç палăртать Федоровсене Михаил Николаевич.

Пархатарлă ĕçне тивĕçлĕ хакланăранах-тăр Ливерий мучи Алексей Талвир, Иван Яковлев премине те тивĕçнĕ.

– Хăш-пĕр чухне юнашар ларса çыратпăр. Хĕрарăмăн урăх ĕç те нумай та, çавăнпах тепĕр чухне вăл савăт-сапа çунă май каласа пырать, эпĕ шухăшăмăрсене хут çине куçаратăп, – савăнăçлăн пĕлтерет арçын.

Мăшăрне хисепленĕренех ĕçе хăй кăна мар, иккĕшĕ тунине палăртать. Анфиса Лукинична та кĕнеке хыççăн кĕнеке тухнине хăйĕн тивĕçĕ те пуррине чухлатех. Хăйне евĕр кăсăклă самант та пулнăха ялта. Хĕрарăм пĕррехинче: «Эпĕ каласа пыратăп, старик – çыраканни», – тесе шÿтленĕ. Çакăн хыççăн чылайăшĕ Ливерий мучие: «Çыравçă тесе ахалех мухтанатăн, арăму каланине çеç пичетлетĕн вĕт», – тенĕ.

Мăшăр пĕр-пĕрне юратса, килĕштерсе хайлав хыççăн хайлав çырни – хăйне евĕр тĕлĕнмелле пысăк ĕç.

### Çирĕп кăмăллă хĕр

54 çул пĕрле Федоровсем. Вĕсем çине пăхсан çемье телейпе те савăнăçпа кун кунлани пирки пĕр иккĕленÿ те çук. Пĕр-пĕрин çине халĕ те ăшшăн пăхаканскерсем ĕмĕрне юратупа килĕшÿре ирттерни куç кĕретех. Паллах, кун-çул тумхахсăр пулмасть. Анчах аларан алă çавăтăнса утсан темле йывăрлăха çĕнтерме те чылай çăмăлрах.

Пĕр ялтах çитĕннĕ вĕсем, пĕр шкултах вĕреннĕ.

– Пĕр кукăртах пурăнаттăмăр. Астăватăп: çÿллĕ кĕлеллĕ пушмакпа та çÿретчĕ вăл, – йăл кулать Ливерий Васильевич.

Авланасси пирки, тен, каярах та шухăшлама пуçлĕччĕ-и çамрăк? Анчах амăшĕ çĕре кĕнĕ. Хĕрарăм аллисĕр пурнăç юхăнать-çке, хуçалăх саланать. Анфиса çинчен шухăшласа илет Ливерий.

– Эпĕ ун чухне Куславккара ĕçлеттĕм. Сурхурие киле килтĕм. Кÿршĕсем патĕнче улах ларатчĕç. Эпĕ те каçрăм. Анфиса та пынăччĕ. Чăваш кĕпипе ытармалла мар чиперччĕ. Ăсатам тесе пĕрле тухрăм. Вăл мана килĕшесшĕн мар. Турткаланнине пăхмасăр алăкĕ умнех çитертĕм. Кăштах калаçса тăрас шухăш пурччĕ. Хĕр мана итлесшĕн те пулмарĕ – алăка шăлтăр-шалтăр хупса кĕрсе кайрĕ. Тухать-и тесе кĕтрĕм – усси пулмарĕ. Çавăн хыççăн пушшех килĕштертĕм ăна. Ÿкерчĕкри пекех илемлĕччĕ вăл. Яланах таса çи-пуçпа çÿретчĕ. Пичĕ çутăччĕ. Ял хĕрĕ çирĕп кăмăлĕпе те çавăрттарчĕ çав, ыттисем пек якăлтатмастчĕ вăл, – мучи куçĕ умне иртнине паянхи пекех кăларать.

### Калавшăн – преми

– Çурт çав тери пĕчĕк те юхăннăччĕ. Çумăр çусан та сĕтел айне кĕрсе лараттăмăр.

/Вĕçĕ 6-мĕш стр./.

НУМАЙ АЧАЛЛИСЕМ

# Вырăнĕ хатĕр. Çурчĕ хăçан пулĕ-ши?

Патăрьел районĕнчи Чăваш Ишекĕнче тăтăшах пулма тÿр килет. Нумай ачаллă амăшĕнчен, почтальонра тăрăшакан Алина Сорокинăран кашниччех тĕлĕнсе таврăнатăп. Пăрчăкан пек правурскер хăш вăхăтра канать-ши? Ял хĕрарăмĕн тĕлĕнмелле ĕç нумай. Алина ир-ирех тăрать те çурçĕр иртмесĕр те куç хупаймасть. Мăшăрĕ Сергей аякка ĕçлеме çÿренĕрен килти мĕнпур йывăр ĕç хĕрарăм хулпуççи çине тиенни вăрттăнлăх мар. Ирех тăрса картишĕнчи выльăхне шăварнă, апатлантарнă хыççăн ачисене ыйхăран вăратать. Шкула чупакан Настьăпа Миленăн çÿçне тирпейлет. Чи кĕçĕннисене – кĕçех пилĕк çул тултаракан Эльвирăпа Эвелинăна – ача садне леçет. Килтен тухса çÿреймен вунултă çулти Сашăна та тимлĕх кирлĕ. Шел те, ултă уйăхрах çуралнăскер çак çутă тĕнчене сусăр килнĕ. Амăшĕн чĕри уншăн та ыратать. Ку вăхăтра пахчара ĕç туллиех, унсăр пуçне сĕт-çăвне вăхăтра тирпейлемелле, утă çулса типĕтмелле. Килти мĕнпур ĕçе вĕсленĕ хыççăн Алина машина тапратать те пилĕк çухрăмри Ыхраçырминчи почта уйрăмне вĕçтерет. Страхлакан агентра тăрăшнă май район центрне те çитсе килет.

Сорокинсем «Нумай ачаллă çемьесене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтересси» программăпа килĕшÿллĕн 2009 çултанпа районта черетре тăраççĕ. Хальлĕхе вара Сергейĕн тетĕшĕн пÿртĕнче пурăнаççĕ. Çурт валли тахçанах вырăн та туянса хунă. Ÿркенменскерсем гараж, пĕчĕк пÿрт хăпартнă. Ылтăн алăллă çемье пуçĕ, кирек мĕнле ĕçе те хавхаланса пурнăçлама хăнăхнăскер, никама тара тытмасăрах тимлет. Платник та, сварщик та хăех. Каскалама та ăста.

Сорокинсем килти хушма хуçалăхран çуллен сахал мар тупăш илеççĕ. Çĕрулми те, кишĕр те, выльăх апачĕлĕх курăк та çитĕнтереççĕ. Кашни çулах 500 тĕпе яхăн купăста лартаççĕ. Садри улма-çырлапа пахчаçимĕç сутмалăх та, хĕл каçичченех тулăх пурăнма та çитет.

Сергейпа Алина Сорокинсем – пĕр-пĕрне чунтан юратакан мăшăр. Алина Чăваш Ишекне Комсомольски районĕнчи Хирти Выçлирен качча килнĕ. Вĕсем çутă тĕнчене пилĕк ача парнеленĕ. Çĕршывăн демографи лару-тăрăвне лайăхлатас енĕпе пурте вĕсем пек тăрăшсан ял урамĕсем ача-пăчан шăнкăрав пек сассийĕпе янăраса кăна тăмалла та ...

Ашшĕпе амăшĕн сăмахне пĕчĕкрен ăша хывса ÿсеççĕ пĕчĕкскерсем. Настьăпа Милена шкулта тăрăшса вĕренеççĕ, уроксем хыççăн та алă усса лармаççĕ. Амăшне хаçат-журнал валеçме пулăшаççĕ. Çиччĕмĕш класри Настя кукăль-пÿремеч, печени тавраш пĕçерме ăста. Амăшĕ ĕçрен ывăнса таврăннă çĕре вĕри апат та пĕçерсе хурать, урай çăвать, кил-çурта тирпейлет. Пăрусене шăварать, ĕне сума та пĕлет хĕрпĕрчи.

– Ачасене сăпкаран уйрăлсанах ĕçе хăнăхтаратпăр, – каласа кăтартать амăшĕ. – Тĕпренчĕкĕмсем пĕчĕкренех тарпа пĕвеннĕ çăкăр хакне пĕлсе ÿсеççĕ. Урам тăрăх йытă хăваласси асра та çук.

– Камшăн мĕнле пуль, пирĕншĕн вара пилĕк ача нумай пек туйăнмасть. Пысăк çемье ĕçре те, сĕтел хушшинче те илемлĕ. Ÿссен пĕр-пĕрне пулăшĕç. Тăван тăварпа писнĕ. Пĕр хуранри яшка-пăтă пурин валли те çитет. Çĕтĕк, выçă çÿретместпĕр. Эпир пĕчĕк чухне килсерен пилĕк-ултă ача пулнă, – тет кил хуçи арăмĕ.

Алина хунямăшĕпе Лидия Петровнăпа пĕр çăвартан пурăнать. Ĕмĕр-ĕмĕр ферма пуçлăхĕнче, зоотехникра ĕçленĕ Лидия Сорокинăна ял-йыш та хисеплет.

Пĕр-пĕрне хисеплекен, çур сăмахран ăнланакан мăшăр малашлăх пирки ĕмĕтленет. Çак туслă та çирĕп çемьене çĕнĕ çурта хăвăртрах хăпартса парсан тем пекехчĕ те. Хальлĕхе вĕсем черетре – саккăрмĕшсем...

**Елена АТАМАНОВА.**

Автор сăнÿкерчĕкĕ.



ПРАВО ХУРАЛĔНЧЕ

# Телейпе тултăр ачалăх



### Çула çитменнисен прависене хӳтĕлесе

Çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕ – Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун. Анчах та çакă ытти чухне вĕсене хӳтлĕх кирлĕ маррине пĕлтермест. Пĕчĕккисемпе те, çула çитменнисемпе те уйрăмах асăрханулла пулмалла – вĕсене кӳрентерме часах-çке. Раççей следстви комитечĕн Чăваш Енри управленийĕ ахальтен мар çак ыйтупа уйрăмах тимлĕ ĕçлет, ача правине пăснă тĕслĕхсене, унпа çыхăннă преступленисене опытлă следовательсем, çула çитменнисемпе хутшăнас енĕпе опыт пухнисем, уçăмлатаççĕ. Шар курнисемпе кăна мар, уголовлă ĕçпе çыхăннă ытти çамрăкпа ача-пăча интересĕсене хӳтĕлесе ытти ведомствăпа килĕшӳ çырса ĕçлесси йĕлана кĕнĕ. Сывлăх сыхлавĕн, Вĕренӳ министерствисемпе, Ача прависене хӳтĕлекен уполномоченнăйпа тăватă енлĕ килĕшӳ алă пуснă. Ку шар курнă çамрăксене психологи реабилитацине хăвăртрах тухма май парать. Çухалнă çынсене, çав шутра ачасене те, шыраса тупмашкăн Шупашкарти волонтерсен центрĕпе çыхăну йĕркеленĕ. Сывлăх – чи хаклă пуянлăх. Мĕн каламалли, ултавçăсем фармацевтсен хушшинче те сахал мар. Унсăр пуçне шурă халат тăхăннисем тепĕр чухне Гиппократ тупи çинчен те манаççĕ. Кун пеккисене тăрă шыв çине кăларма Раççей сывлăх надзорĕн Чăваш Енри управленийĕпе пĕрле тăрăшаççĕ. Çула çитмен çамрăксемпе çыхăннă преступленисене уçăмлатма, паллах, республика прокуратурипе тата ШĔМпе тачă çыхăнса ĕçлени пулăшать.

Раççей следстви комитечĕн Чăваш Енри управленийĕнче "Ача – хăрушлăхра" лини уçнă. Инкеке, хăрушлăха лекнĕ пепкесемпе çула çитмен çамрăксем пирки пĕлсен-илтсен 8 /8352/ 45-23-99 номерпе шăнкăравламалла. Ку "хĕрӳ лини" шутланать. Шăнкăравсене талăкĕпех йышăнаççĕ.

### Шкултан таврăнман...

2014 çулхи çурла уйăхĕн 12-мĕшĕнче Куславккара пулса иртнĕ тискер ĕç республикăна мар, çĕршывĕпех кисретрĕ. Усал ĕçе тăваканни – Тутарстанра пурăннă арçын. Следстви, унтан суд палăртса çирĕплетнĕ тăрăх, арçын çав кун кăнтăрла тĕлнелле шкулти практикăран таврăнакан 11 çулти хĕрачана киле илсе çитеретĕп тесе машинăна лартнă. Анчах кустăрмаллă урхамах хуларан тухса вăрман еннелле пăраннă. Хĕрачана пусмăрланă, унтан вĕлерсе çĕре чавса чикнĕ. Право пур хурал органĕ те пĕрле ĕçлени усал ĕçе хăвăртах уçăмлатма май панă. Кăçалхи пуш уйăхĕнче ЧР Аслă Сучĕ хайхи арçынна /арçынах темелле-ши ăна?/ 23 çуллăха кирпĕч шутлама ăсатнă.

Аслати авăтмасăр хĕрес хывмаççĕ çав... Вырăнти лару-тăрăва инкек хыççăн çеç тишкерме пуçланă. Йĕркене пăснă нумай тĕслĕхе тупса палăртнă. Ачасене çуллахи практикăна ашшĕ-амăшĕ çырса ирĕк памасăрах явăçтарнă-мĕн. Çак вăхăтра ачасене шкул автобусĕпе турттарасси те манăça тухнă. Следователь ыйтнипе шар курнă хĕрачан класс ертӳçине, шкул директорне, Куславкка вĕренӳ управленийĕн яваплă ĕçченне айăпланă. Ачасене вĕренӳпе çыхăнман мероприятисене турттарассине йĕркеленĕ, çĕнĕ вĕренӳ çулĕнчен пуçласа шкул автобусĕн маршрутне улăштарнă.

### Çамка çинчи "иккĕ"

Шăв-шав çуратнă уголовлă тепĕр ĕçе Комсомольски районĕнчи кĕçĕн классене вĕрентекен тĕлĕшпе пуçарнă. Ун вĕçне кăçалхи çу уйăхĕнче пăнчă лартнă. Тĕпчев палăртнă тăрăх, 2013 çулхи нарăс – 2014 çулхи çу уйăхĕсенче вăл кĕçĕн классенче ăс пухакансем тĕлĕшпе педагогшăн юрăхсăр мелсемпе усă курнă. Шăпăрлансенчен пĕрин çăварне скотчпа çыпăçтарса хунă, теприсен çамки çине хĕрлĕ чернилпа "иккĕ" паллă ӳкернĕ. Ашкăнакансене, киле панă ĕçсене пурнăçламаннисене, йăнăш тăвакансене ĕнсе чикки лектерме те пултарнă. Вĕрентекене 3 çуллăха условнăй майпа айăпланă, 50 пин тенкĕлĕх штрафланă. Унсăр пуçне тепĕр икĕ çул профессипе ĕçлеме юрамасть унăн.

### Ясар "режиссер"

Шупашкар хулин Мускав районĕн судĕнче Çĕрпӳ арçынни тĕлĕшпе ĕçе 2015 çулхи ака уйăхĕнченпе тишкереççĕ. Вăл тунă преступлени 32 эпизода сăнлать – ытларахăшĕ çула çитмен 8 çамрăкпа çыхăннă. 2010 çулхи чӳк – 2014 çулхи утă уйăхĕсенче вăл ачасем хăйсене хӳтĕлейменнипе усă курса вĕсене ар çыхăнăвне явăçтарнă. Тепĕр чухне çакăншăн тӳленĕ те – 500-шер тенкĕ. Ясарлăхсăр пуçне пултарулăх та "аталаннă" курăнать усал шухăшлăскерĕн – çула çитменскерсене вăл видеопа ӳкернĕ, каярахпа çакна Интернетра сарнă. Ашшĕ-амăшĕ çак вăхăтра ăçта пулнă-и? Шăпах вĕсен тимлĕхне пула çакланнă та ясар "режиссер". Пепкисем палламан арçынпа СМС урлă хутшăнни сисчĕвлентернĕ вĕсене. Малтанах арçынна хăйсем тĕлĕн шыраса тупма хăтланнă. Анчах та лешĕ ырă мара сиссе преступлени йĕрне пытарма хăтланнă, видеосюжетсен пĕр пайне тĕп тунă. Хăй ют çын паспорчĕпе Мускава тухса тарнă. Çĕршыв тĕп хулинче хваттер тара илсе, сăмах май, вĕсене улăштарсах тăнă, темиçе уйăх пурăннă. Анчах капкăн хупăннă – арçынна çапах та тытса чарнă.

**ЦИФРĂСЕМПЕ ФАКТСЕМ. Раççей следстви комитечĕн Чăваш Енри управленийĕ 2014 çулта право хуралĕн органĕсемпе пĕрле çула çитмен 173 çамрăкпа çыхăннă 179 уголовлă ĕç пуçарнă /2013 çулта – 176/. Кăçал çак тапхăрта çакăн йышши 54 ĕçе шута илнĕ. Пĕлтĕр çакăн йышши 92 ĕçе суда çитернĕ, кăçал – 29.**

**Статистика çирĕплетнĕ тăрăх, 2014 çулта усал çынсенчен çулталăк та тултарман 13 пепке шар курнă, 1-14 çултисем – 88, 14-ран пуçласа 17 çулччен – 72. Арлăх /ясарлăх тесен тĕрĕсрех-тĕр/ тĕлĕшпе пĕлтĕр çула çитмен 62 çамрăк инкек тӳснĕ, вĕсенчен 35-шĕ 14 çул та тултарман. Кăçал та çак ӳсĕмри 3 çамрăк аслисен ясарлăх туйăмĕн чаракĕ çуккине пула шар курнă.**

**Раççей следстви комитечĕн Чăваш Енри управленийĕн Шупашкар хулинчи Ленин районĕнчи уйрăмĕн материалĕсемпе усă курнă.**

# Чăваш хушшинче хĕрарăма хисеплекен арçын пурах

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 5-мĕш стр./.

1959 çулта салтакран отпуска килтĕм. Çакăн хыççăн министерствăна çыру ятăм: киле ямашкăн ыйтрăм. «Совет Союзне эпĕ салтак пулса çеç мар, колхозра тăрăшса та усă кӳреетĕп», – терĕм унта. 1960 çулта салтакран таврăнтăм. Анне чирлĕ выртатчĕ, 3-мĕш класа каякан шăллăма пĕччен йывăр-çке. Çавăнпах киле янишĕн савăнтăм.

Чаçре хамăр тăрăхран Шоркин ятлăскер пурччĕ, апат-çимĕç складĕнче ĕçлетчĕ. «Чăваш чăваша пушă алăпа ан яр ĕнтĕ, ман валли сумка хатĕрле», – терĕ ăна. Тĕрлĕ консерва пуçтарчĕ вăл. Эпĕ ăна уншăн, паллах, укçа патăм. Ун чухне чаçре «Боевое знамя» хаçат тухатчĕ. Калав çырма конкурс йĕркеленĕччĕ унта. Пĕрремĕш вырăн йышăнакана 150 тенкĕ пама шантарнăччĕ. Çавна тивĕçрĕм те.

Çĕмĕрлере икĕ çăкăр туянтăм. Киле çитрĕм те аннепе шăллăм йĕрсех ячĕç. Вĕсен çимелли те çукчĕ. Пӳрт те сивĕччĕ. Хутма вутă та çукчĕ. Кӳршĕсенчен çунашка илсе вăрмана чупрăм. Хăрăк юман нумайччĕ унта. Пĕр çунашка тиесе таврăнтăм. Хирĕç леçник пулчĕ тата. Эпĕ чĕрĕ йывăç касманнине, хăрăккине çеç пуçтарнине ĕненесшĕн пулмарĕ ӳсĕрскер. Юрать унпа пĕрле хамăр ял çынни пурччĕ. «Тăлăх ача, ан тив ăна», – терĕ вăл, – каласа кăтартать Ливерий Федоров.

### Ырă çынсем пурах

Салтакран таврăнсан тепĕр кунах ял ачисемпе вăрмана ĕçлеме кайнă яш. Çăва тухсан комсомолăн райони комитетне ĕçе илнĕ ăна.

– 750 тенкĕ çеç тӳлетчĕç. Ун чухне вăл укçа та марччĕ. Манăн пӳрт хăпартмалла-çке. Пĕренисене турттартăм-ха. Тата платниксене тара тытмалла-çке, хăмине те туянмалла. Пĕр тĕпренчĕк çăнăх та çукчĕ. Райком председателĕнчен Николай Федоровран пулăшу ыйтрăм. Çапла банкпа мана ссуда пама каласса таталчĕ. Документсем илсе килме каларĕç. 5 пин тенкĕ парса та ячĕç. Пӳрт туса лартрăмăр унпа. Часах укçа тӳлемелли хут та килме тытăнчĕ. Манăн ĕç укçипе ăна тӳлеме йывăр пулать тесех арăма хăварса нухрат пухма аякка тухса кайрăм.

Çĕр çинче тĕлĕнтермĕш пурах. Красноярска çитрĕм. Вокзал çумĕнчи пĕр сак çинче шурсухал ларать. Сăнĕпе Турă пекех туйăнчĕ вăл мана. Туйи те çаплахчĕ. Манпа тӳрех калаçмарĕ-ха. Эпĕ те чĕнме хăрарăм. Кайран тин: «Ывăлăм, ăçта каятăн?» – тесе сăмах хушрĕ. Эпĕ те вăй илтĕм. Çапла хамăн хуйха пĕлтертĕм. «Ăçта каймалла-ши?» – тетĕп. Вăл мана Норильска кайма сĕнчĕ. Çулне те ăнлантарчĕ. Мана, укçасăр юлнăскерне, 500 тенкĕ парса ячĕ. Çул çинче пĕтрĕ вăл. Норильскра икĕ çамрăк ачана тĕлпултăм. Вĕсенчен пĕр татăк çăкăр ыйтрăм. Какайпа та хăналарĕç хайхисем. Çапла ырă çынсен тĕлне пĕрре мар пулнă эпĕ, – ăшшăн калать арçын. Вĕсене курах хăй те çынпа тараватлă пулма тăрăшни те палăрать.

### Ватлăхри киленĕç

3 çул шахтăра ĕçленĕ кил хуçи. Çак вăхăтра Анфиса Лукинична мăшăрне хĕр парненĕ. Упăшки таврăнсан тата икĕ хĕр çуратнă. Хĕрарăм ĕмĕрĕпех колхозра тăрăшнă. Арçын тăван тăрăха таврăнсан 28 çул вăрманта тар тăкнă. Пенсие тухсан та килте ларас килмен унăн, çавăнпах район хаçачĕпе çыхăну йĕркеленĕ. Тĕрлĕ статья пичетленĕ унта. Анчах çулсем иртнĕ май тухса çӳреме йывăрланнă. Сывлăхĕ хавшанине хăй те туйнă мучи. Çавăнпах килте кĕнеке çырма тытăннă та.

Вĕсене кун çути кăтартма мăнукĕ Саша пулăшать. Шупашкарта ĕçлекенскер кукашшĕне кукамăшне савăнтарма хавас. Çавăнпах çĕнĕ хайлавсене тĕрлĕ типографие çитерет.

Çемьере юратупа шанчăклăх пулмаллах. Федоровсем – çакăн тĕслĕхĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ вĕсене «Юратупа шанчăклăхшăн» орден медалĕпе чыслама сĕннĕ. Вĕсем çак чыса чăнласах тивĕç.

Ватлăхра тупнă киленĕç мăшăра малашне те илĕртсе, хавхалантарса пырĕ.

**Татьяна НАУМОВА.**

ВĂРÇĂ АЧИСЕМ

# Тăван çĕршыв та, анне те – пĕрре



**Пин сум пуличчен яланах çумра аннесем пулччăр. Вĕсен пилĕ пурин валли те çитет. Сывăх сынсен ăшăлăхĕ вĕренме, ĕçлеме, пурăнма вăй-хал парса тăрать. Шел те, çулсем иртнĕ майăн аннесем пирĕнтен яланлăхах уйрăлса каяççĕ, çавăнпа та сывă чухне упрасчĕ, йывăр чухне пулăшасчĕ вĕсене.**

**Манăн 85 çулти Елена Иванова çинчен каласа кăтартас килет. Вăл – 5 ача амăшĕ. Çак çула çитнĕ пулин те çамрăк чухнехи пекех илемлĕ, çыпăçуллă, типтерлĕ. Ачисемшĕн вăл – ырă тĕслĕх, пурнăç тыткăчи.**

Елена Ивановна 1929 çулта Вăрмар районне кĕрекен Вăрманкас ялĕнче çуралнă. Юнлă вăрçă пуçланнă чухне вуникĕ çулта çеç пулнă. Аслисемпе тан уйра ĕçленĕ, 200 грамм çăнăхшăн кĕлтесем çĕкленĕ, авăн çапнă, çум çумланă, пахчаçимĕç шăварма çÿренĕ ачасем.

«Çĕнтерÿ кунне паянхи пекех астăватăп. Эпир, ачасем, уйра ĕçлеттĕмĕр, уй-хир бригадирĕ чупса çитрĕ те вăрçă чарăнни çинчен пĕлтерчĕ. Эх, пĕр-пĕрне ыталатпăр, макăратпăр, савăннипе сикетпĕр. Эпир пĕтĕм вăй-халтан çĕнтерĕве çывхартма тăрăшнă. Колхоз лашисене вăрçа ăсатнăччĕ ун чухне. Лаша вырăнне вара хĕрарăмсем хăйсемех пĕр ÿкĕтлемесĕрех кÿлĕннĕ. Арçын та пулнă вĕсем, хĕрарăм та. Çĕрпе куна асăрхами ĕçлетчĕç, епле ырсан та йывăр çĕклемсене йăтатчĕç», – шăлать кусçульне шурă çÿçлĕ хĕрарăм, вăрçăпа тыл ветеранĕ.

Елена Ивановна Вăрмар районĕнчи «Динамо» колхозра ĕçленĕ. 1952 çулта Энтрияль каччипе Иван Ивановпа çемье çавăрнă, пилĕк ача çуратса ÿстернĕ. Мăшăрĕ 32 çул каялла ку тĕнчерен уйрăлса кайнă. Ашшĕсĕр юлнă ачисем хăйсене нихăçан та тăлăх туйман, мĕншĕн тесен вĕсемпе юнашар яланах хастар та ăшă чунлă, ура çинче çирĕп тăракан ĕçчен амăшĕ пулнă.

Елена Ивановнăн ĕç стажĕ – 47 çул. Вĕсенчен 22 çулне вăл Энтриялĕнчи вăтам шкулта поварта тăрăшнă. Виççĕр ытла ача валли тутлă та усăллă апат пĕçернĕ. Пĕчченех пĕтĕм ĕçе ĕлкĕрнĕ, тăхтав вăхăтĕнче кăна ăна ачасем чашăк-тирĕк çуса пулăшнă, çĕрулми шуратса панă. Елена Ивановнăн тутлă яшкине çаплипех пурте аса илеççĕ.

1989 çулта шкулти интернатра Шутнерпуç ялĕнчен килекен 1-4-мĕш класри 15 ача валли вутă хутса пÿлĕмсене ăшăтма, вырăн таврашне çума, каçхи апат пĕçерме пуçланă. Çав хушăрах нумай çул халăхран сĕт пуçтарнă. Пултаруллă хĕрарăма юбилей медалĕсемпе, Хисеп хучĕсемпе, Тав çырăвĕсемпе чысланă.

«Пире аннен тивлечĕ пурнăç çулĕпе çирĕппĕн утма хистет. Аслă пĕлÿ илме, хамăр суйласа илнĕ ĕçре çитĕнÿсем тума пулăшнă вăл. Эпир тивĕçлĕ канăва тухнă пулин те аннепе юнашар ларсан хамăра пĕчĕк ача пекех туятпăр», – теççĕ тĕпренчĕкĕсем амăшĕ çине пăхса. Куç тулли ачисем ăна 12 мăнук парнеленĕ, мăнукĕсен ачисем те пур.

Елена Ивановнăн икĕ хутчен операци тÿссе иртерме тивнĕ. Йывăр вăхăтра ачисем яланах юнашар пулнă, чир хыççăн ура çине тăма пулăшнă. Паянхи кун ăна хĕрĕ Роза пăхать. Ывăлĕпе кинĕ кашни кунах кĕрсе тухаççĕ, аякри хĕрĕсем шăнкăравласах тăраççĕ, мăнукĕсем чунтан юратаççĕ.

Вăтă амăшĕшĕн ăшă сăмах калани, çепĕççĕн пырса ыталани нимрен хаклă. Ăна Турă малалла та сывлăх, çăмăллăх парса тăтăр.

**Зоя РАЗУМОВА.**
Вăрмар районĕ.

ХАСТАРРИСЕМ

# Йăхра палăрман çул-йĕре суйласа...

**– Дежурство лăпкă иртрĕ темелле. Талăк хушшинче пĕр пушар сÿнтертĕмĕр – «Октябрь: 50 çул» урамра пĕр дачăна çулăм хыпса илнĕ. Текех тухса çÿремелле пулмарĕ. Çавăнпах вăхăта вĕренме уйăртăмăр, – пуçларĕ калаçăва Евгений Долгов.**

**Шупашкарти Ленин районĕнчи пушарпа çăлав хуралĕн 4-мĕш чаçĕн 2-мĕш караулĕн пуçлăхĕпе çу уйăхĕн 18-мĕшĕнче тĕлпултăмăр.**

«Хĕрлĕ автан» алхасман чухне те çывăрса выртмаççĕ иккен пушарнăйсем. Тренировка ирттереççĕ, спорт тата пушар нормативĕсене пурнăçлаççĕ. Темле лару-тăрăва лексен те çавăрăнса тухма пултармалла-çке вĕсен. Çавăнпах çирĕп те, хăвăрт та, тавçăруллă та пулмалла. Унсăрăн сулăм каçармасть.

Евгений çамрăк пулин те – караул пуçлăхĕ. Çулне пăхмасăр шаннă ăна çак тивĕçе. 2013 çулта Раççей МЧСĕн Ивановăри пушар службин патшалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă вăл. 5 çул пушар хăрушсăрлăхĕн инспекторĕн ăсталăхне хăнăхнă. Анчах хутсемпе çеç ĕçлес темен çамрăк. Пушар сÿнтересси, инкеке лекнисене çăласси яваплă ĕç иккенне туйнă. Шупашкарти Ленин районĕнчи пушарпа çăлав хуралĕн 4-мĕш чаçне вырнаçма май пуррипе усă курса тин диплом илнĕ лейтенант кунта килнĕ те.

– Икĕ çул ĕçлетĕп ĕнтĕ. Çамрăксенчен эпĕ пĕччен мар. Караул ытти пуçлăхĕсем те çамрăксем, манпа тантăшсемех темелле. Малтанах ĕç майне хăнăхма çăмăл пулмарĕ. Тĕрлĕ хут нумай çырмалла. Çав вăхăтрах пушар та сÿнтермелле, ăмăртусене те хутшăнмалла. Подразделенисен хушшинче тĕрлĕ енлĕ тупăшу час-часах иртет. Йышпа та чылай ĕçлемелле: вĕренÿсем, тренировкăсем куллен ирттермелле. Çур çултан хăнăхса çитрĕм ĕçе, – тет çирĕппĕн йĕкĕт. – Ĕçлеме пуçласанах тÿрех тенĕ пек пĕчĕккисем те, пысăк пушарсем те пулчĕç. Икĕ çулта хамăн ĕçе лайăххах хăнăхса çитрĕм. Ĕçри пĕрремĕш пысăк пушар Хуçалăх проездĕнче пулчĕ. Унта пластик чÿречесен склачĕ çуннĕ. 9 сехет сÿнтертĕмĕр. Ĕç чăннипех мĕр тери йывăррине çавăн чухне çеç туйрăм.

Караулта пушар хăрушсăрлăхĕн ветеранĕсем те, çамрăксем те пур. Чылайăшĕ – атте вырăнĕнчех. Анчах эпир – пĕр йыш. Йышра вара пуçлăх тата ăна пăхăнакансем пур. Пуçлăх çамрăк пулсан та ăна итлемеллине ăнланаççĕ. Çавăнпах – çăмăл та. Чи кирли – пĕр-пĕрне шанни, унсăрăн йывăр, – пытармасть пушарнăй.

Хăйне шанма юранине ĕçе пуçăнсанах пĕлÿ енчен те, спорт тĕлĕшĕнчен те çирĕплетме тăрăшнă яш. Нумай çул вăй хуракансем вара сĕнÿ-канашпа пулăшнă. Кирлĕ чухне халĕ те вĕрентеççĕ.

Пушар чаçĕнче тăватă караул. Пĕрпĕринпе черетленсе дежурстввăра тăраççĕ вĕсем. Караулта – 10 çын. Кашни кун пушар вискĕ машини çынсене пулăшма тухса кайма хатĕр тăрать.

Етĕрне районĕнчи Тури Ачакра çуралса ÿснĕ Женя. 2008 çулта шкул пĕтерсен Ивановăна кайма тĕв тунă. Ашшĕпе амăшĕ сĕннĕ-ха ку шухăша. Каччăна хăйне те форма илĕртнĕ.

– Çар çыннисем çине яланах темле хавхаланупа, мăнаçлăхпа пăхаттăм. Пирĕн йăхра пакунлă çынсем çук. Хам çак çула суйласа илнишĕн пĕрре те кулянмастăп. Чăваш Енре çирĕплемме институтран хĕрлĕ дипломпа вĕренсе тухни те пулăшрĕ, – тет яш.

Ачаранах тĕрлĕ ăмăртăва хутшăннă вăл. 9-мĕш класра вĕреннĕ чухне «Орленок», «Зарница» çарпа патриот вăййисенче ылттисемпе тупăшнă. 2010 çулта Хисеп хутне тивĕçнĕ – взвод командирĕн чи лайăх заместителĕ пулса тăнă.

– Вĕренме ăçта каясса систернĕ май юлташсене те хампа пĕрле чĕннĕччĕ. Никам та килĕшмерĕ ун чухне. Халĕ хăшĕ-пĕри пĕрле пыманшăн ÿкĕнет те. Манăн çитĕнÿсемшĕн вĕсем те савăнаççĕ, – шкулти тусĕсене манмасть Женя.

Çулăма кĕнĕ чухне çурăм хыçĕнче опытлă ĕçтешсем тăнине туйни пĕр



чăмăра пухать. Çынсене пулăшасси, вĕсен пурнăçне çăласси – чи пысăк тивĕç. Çынна хăтарсан чунра тÿрех çăмăлланать. Халăха эвакуацилемелли пушар та пулнă пурнăçра. Пĕррехинче «Шупашкар» универмага хирĕç пĕр çурт çуннăччĕ. 7-мĕш хутран çынсене кăларма тиврĕ. Тĕтĕмпе чыхăннă хваттер хуçине çăлнăччĕ. Маршак урамĕнче те арçынпа хĕрарăма сĕрĕмрен хăтарнăччĕ. Мускав проспектĕнчи пысăк пушар вăхăтĕнче пĕр подъездри çынсене пĕтĕмпех эвакуацилеме тивнĕччĕ. Çур гарнизон тухнăччĕ унта. Эпĕ те ун чухне пĕр хĕрачапа арçын ачана хăтартăм, – сăмах çăмхине малаллах сÿтет Евгений Долгов.

Çак инкек хыççăн пушарнăйсен йышĕнче пысăк наградăна тивĕçекен чылай пулнă. Çав шутрах Женьăна та «Пушар вăхăтĕнчи паттăрлăхшăн» медальпе чысланă.

Медальсене Евгений, тĕрĕссипе, институтрах «пухма» тытăннă. Вĕсен йышĕнче – лайăх вĕреннĕшĕн те, службăна парăннăшăн та. Каччă кăкăрне çавăн пекех «Лайăх пушарнăй» паллă та илемлетет.

2010 çулти пушарсене пурте астăватпăр. Вăл çу пушарнăй пулас ĕмĕтлĕ студентсем Иваново облаçĕнчи пушарсене сÿнтернĕ çĕре хутшăннă. 2012 çулта Крымска шыв илнине те манмастпăр. Пулăшу кÿрес тĕллевпе Иваново йĕкĕчĕсем унта та çитнĕ. 150 студентран тăракан ушкăн ишĕлчĕксене суйланă ĕçсене хутшăннă.

– Пушартан хăраман çын çук пулĕ тесе шухăшлатăп. Çунакан хваттере кĕнĕ чухне хăвна мĕн кĕтнине нихăçан та пĕлме çук. Анчах çын теме те хăнăхать. Çунакан хваттерте çын пуррине пĕлни вара чăннипех хăрушă, – тет Женя «Хăрамастăн та-и?» ыйтăва хуравланă май.

Даниловсен висĕ ывăлĕнчен Женя – вăтамми. Тетĕшĕ Сергей тата шăллĕ Костя пачах урăх ĕçсене кăмăллаççĕ. Ашшĕ – ялти культура çуртĕн директорĕ. Михаил Сергеевич «Вирьял» фольклор ушкăнне йĕркелесе пырать. Амăшĕ Валентина Васильевна та нумай çул клубра ĕçленĕ. Çавăнпах хăй йăхра палăрман çулйĕрпе кайнине калать те йĕкĕт. Чунĕпе ĕçе парăннă çамрăк хальлĕхе çемье çавăрман-ха.

**Татьяна НАУМОВА.**
Людмила ЛУКИНА сăнÿкерчĕкĕ.

АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Купăстапа, кишĕрпе



**300 грамм купăста, консервланă 100 грамм ананас, консервланă 50 грамм кукkурус, 50 грамм кишĕр, тасатнă 30 грамм хĕвелçаврăнăш вăрри кирлĕ.**

**Соус валли 100 грамм хăйма, 1-ер апат кашăкĕ панулми уксусĕ, сар пăрăç, сахăр, 1/3 чей кашăкĕ тăвар, чĕптĕм авăртнă хĕрлĕ пăрăç хатĕрлемелле.**

Вĕттĕн туранă купăстана алăпа çемçетмелле. Кишĕре теркăламалла. Ананаса пĕрчĕлесе касмалла. Хĕвелçаврăнăш вăррине ăшаламалла.

Хăймана панулми уксусĕпе, сар пăрăçпа, сахăрпа, тăварпа, авăртнă хĕрлĕ пăрăçпа пăтратмалла. Çимĕçсене соуспа пăтратмалла, çиелтен хĕвелçаврăнăш вăрри сапмалла.

### Турамăш

**300 грамм кăлпасси, 2 хăяр, 6 редис, симĕс сухан, укроп, пĕçернĕ 3 çăмарта, 0,5-шер литр турăх, шыв, 1 чей кашăкĕ сар пăрăç, тăвар, пуçлă 1 сухан, 1 кишĕр, тип çу кирлĕ.**

Çăмартапа кăлпассие тăваткалласа турамалла. Редиспа хăяра, кишĕре теркăламалла. Укропа, сухана вĕттĕн касмалла.

Кишĕрпе пуçлă сухана тип çупа ăшаламалла. Çимĕçсене турăхпа шыв хутăшĕпе пăтратмалла, сар пăрăçпа тăвар хушмалла.

### Уçăлтаракан яшка

**1-2 хăяр, укроп, 1 шăл ыхра, 1 чей кашăкĕ олива çăвĕ, 1 чей кашăкĕ лимон сĕткенĕ, 300 миллилитр турăх, 100 миллилитр сĕт, 20 грамм аçтăрхан мăйăрĕ, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Хăяра тăваткалласа турамалла. Симĕс сухана, аçтăрхан мăйăрне вĕттĕн турамалла. Хăярпа укропăн пĕр пайне айккине илсе хумалла.

Сĕте, турăха, хăяра, укропа, лимон сĕткенне, ыхрана, олива çăвне миксерпа пăтратмалла, тăварпа пăрăç хушмалла. Хатĕр яшкана турилккене ямалла, хăярпа, мăйăрпа, укроппа илемлетмелле.

### Çĕрулми хăпартăвĕ

**4 çĕрулми, 2 çăмарта, 1 шăл ыхра, 3-4 апат кашăкĕ майонез, 100 грамм сыр, укроп, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Сырпа ыхрана теркăламалла. Сырăн çур пайне 1 çăмартапа, вĕтетнĕ укроппа пăтратмалла. Тепĕр çăмартана юлнă сырпа, ыхрапа, майонезпа хутăштармалла.

Теркăланă çĕрулмие сырпа ыхра хутăшĕпе пăтратмалла, тăварпа пăрăç сапмалла.

Çĕрулмие çатма тĕпне сармалла. Ăна çăмартапа сыр хутăшĕпе витмелле. Хăпартăва духовкăра 40 минут пĕçермелле.

### Çăмартапа симĕс сухан кукăлĕ

**Чуста çăрма 160 грамм услам çу, чĕптĕм апат соди, 400 грамм хăйма, 2 çăмарта, 280 грамм çăнăх, 1 апат кашăкĕ сахăр, 1 чей кашăкĕ тăвар кирлĕ.**

**Ăшне хума пĕçернĕ 3 çăмарта, 120 грамм симĕс сухан, тип çу, тăвар, пăрăç хатĕрлемелле.**

Ирĕлтернĕ услам çăва тăварпа, сахăрпа, хăймапа, кăпăклантарнă çăмартапа пăтратмалла, çăнăх, апат соди хушмалла.

Вĕтетнĕ симĕс сухана тип çупа кăшт ăшаламалла. Çулăма сӳнтерсен çăмарта, тăвар, пăрăç ямалла. Чустан çур пайне çатмана сармалла. Çăмартапа симĕс сухан хутăшĕ хумалла. Юлнă чустапа витмелле. Кукăле духовкăра 40 минут пĕçермелле.

### Килти сыр

**1 литр сĕт, 0,5 литр турăх, 1 çăмарта, 1 чей кашăкĕ тăвар, 1 чей кашăкĕ сахăр, чĕптĕм лимон йӳçекĕ кирлĕ.**

Сĕт вĕреме кĕрсен çулăма сӳнтермелле, тăварпа сахăр хушмалла. Сĕте пăтратса турăх ямалла. Хутăш пĕрпеклениччене пăтратмалла.

Дуршлаг тĕпне 4 сий марля хумалла. Вĕри хутăша 15-20 минут сăрхăнтармалла.

Çăмартана лимон йӳçекĕпе пăтратса кăпăклантармалла. Тăпăрчпа çăмартана хутăштармалла. Килти сыра 12 сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла.

ПĔЛЕТĔР-И?

# Ыйхи тутлă пултăр

Каçхи апатра çак çимĕçсемпе сăйлансан тутлă ыйха путма пулать.

**Панулмире** çăмăллăн ирĕлекен клетчатка нумай. Çавăнпах хырăм та час выçмĕ. Çав вăхăтрах вăл юнри сахăр шайне те хăпартмасть.

**Сĕлĕ пăтти.** Çывăрса тăранас тесен каçхи апатра шăпах сĕлĕ пăтти çимелле. Улма-çырла хушнăскер хăвăрт выçтармасть. Шултăра авăртнă кĕрпене суйласан аван.

**Кăркка какайĕ** В ушкăнри витаминсемпе пуян. Вĕсем ыйха лайăх витĕм кӳрекен серотонин кăларма май параççĕ. Какай гемоглобин шайне те йĕркелет.



**Сĕте** ĕлĕкех лăплантаракан апат тенĕ. Каçхине кăштах пыл хушса 1 стакан сĕт ĕçни те çителĕклĕ.

**Салтак тӳми** чейĕ апат мар пулин те лăпкă çывăрма пулăшать. Ку курăк килĕшмесен лимон курăкĕн е çимĕçĕн шывĕ те паха.

**Симĕс çулçăллă пахча-çимĕç: салат, купăста** В ушкăнри витамнсемпе пуян. Ку апатсенче калори те сахал.

**Тăпăрчă** лайăх çывăрма çеç мар, кăмăла хăпартма та пулăшать. Çавăнпах вăл депрессирен сыхлать.

ШУТА ИЛМЕ

# Шĕпĕн йăлăхтарсан

● Шĕпĕне ыхрапа симĕс панулми /йӳççи пулсан аванрах/ касăкĕсемпе черетлесе сăтăрмалла. Кун каçа – 5-6 хутчен. 2-3 кунран шĕпĕн чакма тытăнать. Çак мелпех ура çинчи хытса ларнă ӳте çемçетме пулать.

● Шĕпĕне таса пурă сĕрмелле, çиелтен вĕтетнине сапмалла та çыхмалла. Йĕпетмелле мар. Пĕрре туни çителĕксĕр, ĕçе темиçе хутчен пурнăçламалла.

● Шĕпĕне куллен симĕс йӳçĕ панулми сĕткенĕ сĕрмелле. Малтан хуралĕ, 10 кунран çухалĕ.

● 2 лимон хуппине турамалла, ăна хупламалăх тĕпелте усă курмалли уксус ямалла. Пĕр эрне ларсан настой хатĕр пулать. Унпа шĕпĕне кунне темиçе хутчен те сĕрмелле.

ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Çĕртме уйăхĕнчи ĕçсем



Халăх сăнанă тăрăх, çĕртмен 10-мĕшĕ хыççăн – шăлан çурăлсан – кăна чăн-чăн çу кунĕсем çитеççĕ. Çавăнпа та ăшша юратакан помидор-хăяра, патиссона, кавăна, тăрăхла кавăна, пăрăçа, кая юлса пулакан купăстана уçă çĕре çĕртмен иккĕмĕш вунăкунлăхĕнче кăна куçарса лартаççĕ. Синоптиксем çанталăкпа паллаштарни тепĕр чухне тӳр килмессе те пултарать. Çĕртме пуçламăшĕнчех калчасене пахчана куçарсан тăм ӳкесрен асăрханни лайăхрах пулĕ, каçхине йăрансене витме тăрăшмалла. Шăпах çак уйăхăн малтанхи кунĕсенче хĕрлĕ кăшманпа кишĕре сайратаççĕ. Тымарĕсене амантасран хăяра кăпкалатма юрамасть, йăран çине пулăхлă хура тăпра кăна сапмалла. Пиллĕкмĕш-улттăмĕш çулçи тухсан калча тăррисене чĕпĕтсе тухмалла, çырла паракан айккинчи хунавсем хăвăртрах вăй илĕç. Йăрансен хушшине улăм е пăчкă кĕрпи сапмалла. Çипписене касма ан манăр.

# Çĕпре шывĕ – паха им-çам

Пахчаçăсен хушшинче анлă сарăлнă Байкал-ЭМ-1 им-çама килте те хатĕрлеме пулать.

3 литрлă кĕленче савăта 2,6-2,7 литр шыв /хлорлине усă куратăр тăк ăна малтан сĕвĕрĕлтермелле/ ямалла. Ăшă шывра ирĕлтернĕ 100 грамм çĕпре, çур стакан сахăр хушмалла. Савăта марльăпа витсе ăшă вырăна лартмалла. Вăхăт-вăхăтăн пăтратмалла. Пăрака йӳçме чарăнсан – пахчаçимĕç валли паха апат. 1 стакан çак хутăша 10 литр шыва ярса кашни çимĕç айне 1 литр сапмалла.

ВУЛАКАН СĔНЕТ

# Калчаран килет

Купăста тухăçлă пуласси калчана епле пăхнинчен те нумай килет. Ăна хамах акса ӳстеретĕп, çĕр çине уйăх тулнă вăхăтра куçаратăп. Кашни шăтăка кăштах çĕрĕк тăпра, пĕрер апат кашăкĕ вĕтетнĕ çăмарта хуппипе кĕл, пĕрер чей кашăкĕ сарă пăрăçпа суперфосфат яратăп. Ку çимĕçе шурă личинка тапăнасран сыхлать. Унтан шăтăксене марганцовкăн хăмла çырли тĕслĕ вĕри шывĕпе сапатăп. Çĕр сивĕнсен калчана лартатăп.

Пĕрремĕш виçĕ кунта куллен шăваратăп, кайран 3-4 кунта пĕрре сапнипех çырлахатăп. Шăнтас хăрушлăх пур чухне кĕленчесемпе витетĕп. Икĕ эрнерен азотпа /10 литр шыва 1 апат кашăкĕ/ апатлантаратăп. Тата икĕ эрнерен суперфосфатпа шăваратăп. Ăна 2 апат кашăкĕ илсе вĕри шывра ирĕлтеретĕп. Хытасран пăтратса тăратăп. Талăк лартнă хыççăн 10 литр шыва ярса усă куратăп. Пĕрер хутчен борпа, молибденпа апатлантаратăп. Туни тĕлне кĕл сапатăп. Хуртланасран суханпа ыхра хуппин шывĕпе сирпĕтетĕп, унта та кунта помидор çулçи çакатăп. Çавăн пекех сарă пăрăç шывĕпе усă куратăп. Ăна 10 литр шыва 2 апат кашăкĕ яратăп, унтах 1 чей кашăкĕ чĕпĕтекен хĕрлĕ е хура пăрăç, 1 апат кашăкĕ шĕвĕ супăнь хушатăп. Купăста пуçĕсем 7-8 килограмм таран ӳсеççĕ.

Тата темиçе сĕнӳ парас килет. Кишĕре эпĕ тунтикун – Уйăх кунĕ, хăяра – çилсĕр çанталăкра акатăп. Çимĕçсене пĕлĕтлĕ чухне шăваратăп. Помидорсене икĕ эрнере пĕрре ыхра шывĕпе сирпĕтетĕп: 200 грамм ыхрана аш арманĕ витĕр кăларса 3 литр ăшă шыва ярса талăк лартмалла. Сăрăхтарсан 10 литр пулмалăх тăрă шыв хушмалла. Ирпе сирпĕтмелле. Нимĕнле фитофтора та çук!

**ВАЛЕНТИНА Д.**
Муркаш районĕ.





ПУРНĂÇ ПĂРĂНĂÇĔ

# Юратсах пĕрлешрĕç те...

Яла кайсан ăна яланах вырăсла хапха умне çапса хунă сак çинче ларнине кураттăм, çăварĕнчен пăрахмасăр сигарет мăкăрлантаратчĕ вăл. Тепĕр чухне урамрах çĕр каçни те пулкалатчĕ.

Кĕске вăхăтрах çын сăнне çухатрĕ Мĕтри. Сухалне хырма пăрахрĕ, нумай вăхăт çумасăр пĕр тумпах çӳрерĕ. Хăйĕн çине алă сулчĕ вăл – никама та кирлĕ мар çын тесе шухăшларĕ пулас.

Икĕ ывăлĕ çемйисемпе тĕп хулара пурăнать. Амăшĕ вилсен яла килсе çӳреме пăрахрĕç вĕсем. Хĕрарăм çĕре вăхăтсăр кĕнишĕн ашшĕне айăпларĕç. Шел, Мĕтри хăйĕн йăнăшне кая юлса ăнланчĕ. Çичĕ теçетке çула парăнтарнăскер малтанах хăй мĕн тунине ăнланмарĕ, чирлĕ арăмне вăхăтра пулăшма тăрăшмарĕ. Кӳршĕ хĕрарăмĕсем ăс парса вăрçни те, юлташĕсем тăна кĕме хушни те усă кӳмерĕ. Чирлĕ мăшăрне ют арçынсем çумне хушса кĕвĕçрĕ. Хаяррине ĕçсе минресен ват пуçĕпех арăмĕ çине алă çĕклерĕ.

Амăшне кӳрентернĕшĕн ывăлĕсем тăн кĕртсе те пăхрĕç – ватта ăслантарайăн-и? Çавăнпах ывăлĕсем пĕр хушăран тăванне хăйсем патне илсе кайрĕç.

Арăмĕ Мĕтрирен пилĕк çул çамрăкчĕ. Шел, куçне ĕмĕрлĕх вăхăтсăр хупрĕ. Арăмĕ вилнине пĕлсен упăшки ларсах макăрчĕ. Ăна пытарсан вара аллине те сулчĕ. Хаяррипе пушшех иртĕхрĕ – манăçма пулăшĕ терĕ-ши? Кирпĕч пысăк çурчĕ те илĕртмерĕ ăна – хапха умĕнчи сак çинчех çывăрчĕ.

Хăйне упраманранах çултаlăкран Мĕтри те çутă тĕнчерен уйрăлчĕ, Анфиса çумĕнче ĕмĕрлĕхех вырăн тупрĕ.

...Ялти вăтам шкул хыççăн районти çар комиссариачĕ Мĕтрие шоферсем хатĕрлекен курса вĕренме ячĕ. Аслă пĕлӳ илес тесе те тăрăшрĕ-ха йĕкĕт. Вĕренме кĕрес шухăшпа экзамен та тытрĕ, конкурс тени ура хучĕ – лекеймерĕ. Шофер правине илсен вунтăххăра кайнă çамрăка салтак тумне тăхăнтартрĕç. Икĕ çултан тăван яла таврăнчĕ вăл, районти автопредприятие вырнаçрĕ. Районти çеç мар, республикăри предприятисене кирлĕ тавар турттарчĕ вăл. Тепĕр чухне вăрăм çула эрнелĕх те тухса кайрĕ. Çапла Чăваш Енпе кӳршĕллĕ ытти региона та çитрĕ. Аванах ĕçлерĕ вăл, укçине те япăх илмерĕ. Амăшĕ сĕннипе кивĕ пӳртне çĕнетме шухăш тытрĕ. Ашшĕ Мĕтри аслă класра вĕреннĕ чухне йывăр чирлесе вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Урăх ача çукчĕ вĕсен. Пĕччен пулин те иртĕхсе ӳсмерĕ Мĕтри.

Пĕррехинче йĕкĕт тĕп хулана канмалли кун кайрĕ. Таврăннă чухне ăна пĕр хĕр алă çĕклесе чарчĕ. Илĕртӳллĕ кĕлеткеллĕ, илемлĕ сăн-питлĕ пике кӳршĕ ялтан пулчĕ. Çул çинче калаçса пынă май пĕр-пĕринпе паллашрĕç вĕсем.

– Эпĕ – Анфиса. Район центрĕнчи лавккара сутуçăра тăрăшатăп, – пĕлтерчĕ хĕр вăтанчăклăн.

Çапла Мĕтри пулас мăшăрĕпе паллашрĕ. Час-часах тĕл пулма тăрăшрĕç вĕсем. Курнăçмасан канлĕхне çухатрĕç.

Канмалли кунсенче Мĕтри пӳрт хăпартма кирпĕч турттарчĕ. Часах çителĕклĕ хатĕрлерĕ ăна, çапла пĕр канмалли кун купалама та тытăнчĕ. Ĕç вăхăтĕнче юратнă хĕрĕпе курса калаçма та вăхăт тупăнмарĕ. Пĕр уйăхра çĕнĕ пӳрт хăпарса та ларчĕ. Ăна тума кирлĕ хăшпĕр материала тупма Анфиса та пулăшрĕ. Çур çултан Мĕтри çĕнĕ пӳрте пурăнмаллах кĕчĕ.

Часах Мĕтри çемье çавăрма шухăш тытрĕ.

– Çĕнĕ пӳрте çĕнĕ çын кĕртсен аванччĕ, – терĕ амăшĕ те.

Хĕрпе каччă пĕр-пĕрне килĕштерсе икĕ çул туслă çӳренĕ хыççăн туй кĕрлеттерчĕç. Шăкăл-шăкăл пурăнма тытăнчĕç вĕсем. Икĕ ывăлне кун çути парнелесе ĕçе юратма вĕрентсе ӳстерчĕç. Ачисем аслисен сăмахĕнчен иртмерĕç, вĕренме тăрăшрĕç. Иккĕшĕ те аллисене диплом илсен тĕп хуларах тĕпленчĕç, ашшĕпе амăшне мăнуксем парнелерĕç.

Пĕрлешсен Анфиса ялти лавккара ĕçлеме тытăнчĕ. Тивĕçлĕ канăва тухиччене тăрăшрĕ вăл унта.

Хĕрарăм чирлеме пуçличчен аванах пурăнатчĕç. Ури ыратнипе асапланчĕ вăл. Мĕтри вара пенси çулне çитсен ирĕке туйрĕ-ши – çуттипе туслашрĕ, арăмĕпе харкашма тытăнчĕ. Çапла пурнăç пилĕк çула тăсăлнă хыççăн Анфиса сывалас тесе больницăна кайса выртрĕ. Усси пулмарĕ – чирĕ шала кайнă терĕç.

Арăмĕ вилмен пулсан Мĕтри те пурăнĕччĕ-и, тен, теççĕ ялта. Ялан пĕрле çӳретчĕç тесе ăмсанакан та пур.

Ывăлĕсем çуртне тачă хупăнма памаççĕ-ха, çулла килсех çӳреççĕ.

**Лилия ЕГОРОВА.**

ВАТЛĂХРИ ЮРАТУ

# Вунă çул каялла...

– Тавтапуç сана, Кĕркури, эсĕ çак çĕр çинче пурришĕн. Тавах Турра, пире тĕлпултарнишĕн, – вуларĕ арçын телефонĕ çине килнĕ çырăва.

Канмалли куна ачисем патне хулана кайнă арăмĕн Альăн саламне илнĕ хыççăн пĕр савăнса, пĕр тунсăхласа вăл хыçлă пукан çине ларчĕ те шухăша путрĕ. Куçĕ умне вунă çул каялла пулни тухрĕ.

...Çав тери йывăрччĕ ун чухне Кĕркурие. Арăмне пытарни сакăр çул çитнĕччĕ. Ывăлĕ çулталăк каялла вилнĕччĕ. Шăпах ачине асăнсан Кĕркури ют хулара пурăнакан аппăшĕ патне хăнана çитсе килме шухăш тытрĕ. Сывлăхĕ те чаплах марччĕ тăванĕн. Пуйăсра вăхăт ирттерме кĕнеке илчĕ вăл. Çапла çул тăршшĕпех «Унесенные ветром» романа аллинчен ямарĕ. Ăна вуланă май вăл никама та илтмерĕ те, курмарĕ те. Хăйĕн пирки те манчĕ Кĕркури. Çапла кĕнеке арçынна йывăр асапран сирчĕ.

Кирлĕ хулана çитсен Кĕркури малтан кучченеç туянас терĕ. Çавăнпах çывăхри пĕр павильона кĕчĕ.

– Манăнне туян, манăн йӳнĕрех, – илĕртеççĕ ăна сутуçăсем.

Кĕркури хул хушшине кĕнеке хĕстернине асăрханă пĕр çамрăках мар сутуçă кăмăлне систерчĕ:

– Манăн та вуласчĕ ку кĕнекене.

– Хам вуласа тухсан сĕнме пултаратăп, – кĕскен хуравларĕ Кĕркури. Хайхи сутуçăран апатçимĕç туянчĕ те ятне ыйтмасăрах тухса утрĕ.

Анчах тин курнăçнă сутуçă асĕнчен тухма пĕлмерĕ. Темшĕн унпа татах курса калаçасси килчĕ.

Çавăнпах яла таврăниччен арçын ирпе пулнă лавккана тепре кĕчĕ. Кăмăлланă хĕрарăма курма май килмерĕ, анчах унăн телефон номерне тепĕр сутуçăран ыйтса пĕлчех.

Кĕрхи ĕçсене вĕçлесен Кĕркури кучченеç пуçтарчĕ те аппăшĕ патне хăнана çитме палăртрĕ. Альăпа та, хайхи сутуçа çапла чĕнеççĕ-мĕн, курнăçасси килчĕ. Хĕрарăм та телефонпа Кĕркурие кĕтсе илме шантарчĕ.

Тăванĕ патĕнче нумай тытăнса тăмарĕ арçын. Альăна ĕçрен кĕтсе илчĕ те иккĕшĕ хула хĕррине кайрĕç.

Таврана каç сĕмлĕхĕ те тĕксĕмлетрĕ ĕнтĕ. Хĕвел йăрăм-йăрăм йĕр хăварса сăрт хыçне пытанчĕ. Часах çăлтăрсем те вăйă пуçларĕç. Çырма тĕпĕнче тăрна куçĕ пек тăрă çăлкуçĕ шăнкăртатать. Çавăнта çитсе тăчĕç те çамрăках мар арçынпа хĕрарăм. Çĕр тĕпĕнчен тапса юхаканскерне тав туса, пил ыйтса пĕр-пĕрне хисеплесе пурăнма шантарчĕç. Тухăçран кĕмĕл уйăх хăпарса тавралăха çутатиччен мăшăр мĕлке çӳллĕ çуртсен хушшинче çухалчĕ.

Хваттере пырса кĕнĕ чухне Аля ывăлĕ Витя урок тăватчĕ. Палламан арçынран ютшăнчĕ вăл малтанах...

Унтанпа 10 çул иртрĕ ĕнтĕ. Витя хăй те мăшăр тупса авланчĕ. Мăнукĕ ваттисенчен уйрăласшăн та мар.

**КĔРКУРИ.**
Шупашкар районĕ.

ВĂТ, ТĔНЧЕ!

# Ай-уй, вăрлаççĕ!



"Чĕрĕ э-эпĕ..." – кăшкăрас килчĕ, анчах та çĕр çине тăсăлса выртма кăна вăй тупăнчĕ. Дружок, çăмламас тусăм, ман тавра çаврăнать кăна, алăран та питĕмрен çулать. Пăшăрханнă маншăн, мăнтарăн, тен, хамран та ытла. Капла чĕрем ура тĕпне çитиччен хăçан юлашки хут пăлханнине астумастăп та. Пурнăçăма палăртнă график тăрăх йĕркелеме хăнăхса çитнĕрен кĕтменлĕхсем пулманпа пĕрех манăн. Анчах та пурнăçăм кутăн çаврăнса кайрĕ пулас. Ăраскалăма хамăн алăран вĕçертсе янăнах туйăнать.

Ĕç кунĕ вĕçленнĕ тĕлелле туссем шăнкăравларĕç: вăрманта шашлăк пĕçереççĕ иккен. "Мана ма чĕнместĕр вара?" – шӳтлесе çеç ыйтрăм. Нумаях пулмасть курнăччĕ-ха вĕсене, тунсăхласа ĕлкĕреймен. "Калама шăнкăравлатăп çав. Сана илме Сашук пырать. Çур сехетрен хатĕр пуль," – терĕ те телефона сӳнтерчĕ. Чăннипе те сӳнтерчĕ. "Шӳтлерĕм кăна", – тесшĕнччĕ. Тепĕр тесен, çав Сашукне тата мĕнле палласа илмелле-ха? Икĕ хут курнă-ши эпĕ ăна? Икĕ хĕр тус Шупашкар çывăхĕнчи пĕр район центрĕнче пурăнаççĕ. Шăпах Сашука пула пĕр-пĕринпе час-часах тĕл пулайратпăр та. Çамрăк арçын пикесене хулана йăпăрт кăна леççе ярать. Пĕррехинче, пĕр тусăн Ольăн çуралнă кунĕнче, мана та çула май лартса кайрĕ. Тĕрĕссипе, çитеймерĕм ун чухне тусăм патне, машинăпа тем пулчĕ. Çур çултан чарăнса ларчĕ те маçтăр килессе кĕтме тиврĕ. Вăл вара темле ĕçкĕрен тухма пĕлмест. Ăшăмра çакăншăн савăнтăм та: çав тери илемлĕ тавралăх. Хĕвел аннă чух Атăл мĕн тери капăр! Вăрманта вара кайăксем хăйсен юррисемпе чуна лăпкаççĕ... Хитрелĕх ытамне лекнĕскер Сашук пирки аса илме-и унта? Ачаш сĕртĕнĕвĕ те шарт! сиктерчĕ. "Эс, эс... " – шутлă вăрçма та хал çитмерĕ. Çапах арçын тӳрех айккине пăрăнса тăчĕ. Апла пулин те калаçу сыпăнсах пычĕ. Сăмахланăçемĕн вăл çемçе чун-чĕреллĕ пулнине ăнлантăм. Тĕнчере кун пек арçын пурри тĕлĕнтерчĕ те. Пĕчченлĕх тыткăнĕнче асапланакан чунăмăрсемшĕн самантлăха çăлăнăç тупăннăн туйăнчĕ.

"Туйăнчĕ çеç," – терĕм те ăшăмра хĕвел аннипе, шурăмпуç тухнипе пĕрле киленнĕ самантсене манма хушрăм хама. Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ, пурнăçăм хăнăхнă йĕркене "ларнăччĕ" ĕнтĕ, Сашук сăнне те аса илес çук халь тин.

Хăй ман ума тухса тăрас мар тăк, чăнах та, палламасăрах иртсе кайăттăм вĕт.

Çӳçне кастарса янă та – пач урăх çын. Машини те урăххи. Çул çинче калаçмарăмăр та темелле. Ара, куçран пăхма именетĕп те. Унчченхи курнăçу пулман та тейĕн. Чĕнмесĕр пыма лайăх мартан вăхăт ирттермелле кам патне кăна шăнкăравламарăм пуль.

Вырăна çитсен хаш! сывласа яма ĕлкĕреймерĕм, туссем: "Халĕ санăн черет, кайрăмăр!" – терĕç те алăран çирĕппĕн тытса çырма хĕрринелле утрăмăр. Сĕтел тулли апат-çимĕç. "Тата мĕн вăрттăннипе сăйлама пултараççĕ-ши?" – хĕрарăма йăлт пĕлес килни пĕтерет çав. Тавралăха сăнаканскер çырма хĕррине мĕнле çитсе тăнине те сиссе юлман. Тарăн тата хăй, тĕпĕнче юханшыв шарлаттарать. Пуçа каçăртарах сăнакаларăм çав... Ура хыçалалла шума пуçларĕ. Шăп çак самантра хыçалтан çĕнĕ пĕлĕшĕмсем кап ярса илчĕç те... альпинистсем усă куракан ятарлă хатĕрсене тăхăнтартма тытăнчĕç. Чăн калатăп, икĕ çырма урлă карнă вĕрен çине епле лекнине аса илейместĕп халĕ.

Эпĕ – лăпкă пурнăçшăн! Шкулта та физкультура урокĕсенчен тарса çӳреттĕм. "Мана нимĕнле экстрим та кирлĕ мар!" – сăмахăмсене ăнланчĕç-ши çырма хĕрринче юлнисем. Хам кăшкăрасшăн, анчах сасă пăшăлтатнă пек кăна тухать. Пирĕн хушшинчи хушă та пысăкланса пырать.

"Кама мĕн япăххи турăм? Каялла туртса илĕр!" – пултарнă таран кăшкăрма пикенетĕп. "Саша санпа калаçасшăн," – терĕç те... çаврăнса утрĕç. Ытлашши хускану тума та хăракансер: "Юрать, юрать, вĕçертĕр тулькăш, çĕрĕпе çăвар ывăнниччен калаçăп," – кăшкăратăп хирĕç. Сашук вара ман çине пăхнă та – çук, кулмасть, шухăшлăн тăрать: "Капла эсĕ тата хитре". "Ăхă, комплимент каламалли вăхăт тупнă," – тарăхнине пытараймастăп текех.

"Качча тухатăн-и мана?" – шӳтленин палли те çук... Хăранипе алă чĕтреме те тытăннăскер "Ăхă, ăхă," – тенисĕр пуçне нимĕн те калаймарăм çав.

Халĕ, çемçе пукан çинче лараканскере, ун чухне пĕлĕтпе çĕр хушшинче çакăнса тăнине ĕненме йывăр. Çав самант пурнăçăма улăштарчĕ те. Туссем: "Сана миххе чикмелле те вăрласа каймалла. Унсăрăн качча каймастăн эсĕ," – тетчĕç çав. Шӳтлеççĕ тесе... Паян çапла та "вăрлаççĕ" иккен хĕрсене: çыхса-пăрахса мар, ирĕкре тата ирĕкпе!

**Надежда МАРИНОВА.**

*Александр АРТЕМЬЕВ*

# Ан авăн, шĕшкĕ!

**/Малалли. Пуçламăшĕ 17-19-мĕш номерте/.**

Унччен те пулмарĕ, Лисук хамăр енчи улах юррине юрласа ячĕ. Сасси!.. Чул хушшипе шăнкăртатса юхакан тăрă шыв çавăн пек янăрать-ши? Çак илĕртӳллĕ тăван кĕвве хама хирĕç ларакан хĕр мар, çамрăк чĕрем юрласа ячĕ пуль терĕм. Малтанхи хут Лисук çине çывăхран пăхрăм та, пирĕн куçсем тĕл пулчĕç... Сарă хĕр мар, çут хĕвел кулчĕ мана хирĕç!..

– Астров! – илтĕнсе кайрĕ çав самантрах тулта. Уяр аçа пекех туйăнчĕ мана ку сасă. Вĕлт кăна сиксе тухрăм çĕрпӳртрен.

– Астров, – тет взвод командирĕ, – хатĕрлен, передовойне каятăн.

– Итлетĕп, лейтенант юлташ!

Каялла чупса кĕретĕп те хыпаланса шинель тăхăнатăп.

– Ăçталла, Петĕр? – тет Лисук. Хăй çавăнтах кулма пăрахрĕ, салхуланчĕ. – Асту, асăрханарах çӳре... телейлĕ пул! – терĕ эпĕ тухса кайнă чух.

Тепĕр çур сехетрен çула тухрăмăр. Курмангалиев, Ворончихин, эпĕ. Пыратпăр хайхи çапла виççĕн. Фронтра çапăçу çук пулин те хутранситрен перкелешни илтĕнет. Çывăхран пуля шăхăрса иртмессерен чĕрем шартах сикет. Ара, пĕрремĕш хут фронтраçке... Çапах та хăранине палăртмастăп-ха, тусăмсем умĕнче хама хам паттăрланса, чуна хытарса пыратăп.

– Итле-ха, Петенька, мĕне пĕлтерет вăл сирĕн «она вон, шишка» тени? – кулса ыйтать Ворончихин. Эпĕ юрă сăмахĕсене вырăсла куçарса паратăп.

– О-о! – тет Курмангалиев. – Ку шăпах пире, гвардеецсене, пырса тивет: ан авăн кăштах çилĕ вĕрнипе! Ха эсĕ ăна, э! Чăваш халăхĕ те, казахсем пекех, юрра ăста иккен... Ку юрра вĕренесех пулать, тăванăмсем; чи йывăр самантра та çирĕп пулма хушать вăл: «Ан авăн!..» Анчах хăш-пĕр сăмахĕсене улăштар эс, Астрăп, хамăр майлăрах ту. Мĕне кирлĕ-ха пире «ан сивĕн, савни» тенисем? Çук-ха пирĕн ун пеккисем.

Эпĕ ун шухăшĕпе савăнсах килĕшетĕп те хам çавăнтах шутласа тупнă сăмахсене хуллен юрласа та паратăп:

Ан парăн, йĕкĕт, ан парăн
Кăштах йывăр килнипе...

– Ай, якши! Ай, аван! – тет казах эпĕ юрă сăввине вырăсла куçарса парсан. – Пирĕн акынсем пекех юрра ăста-çке эсĕ, Астрăп. Юрри чаплă ĕнтĕ, хамăр аслă Джамбул хывнă тейĕн. Анчах хăть мĕн калăр та, «йĕкĕт» вырăнне «батыр» тесе юрламалла, капла пушшех те ăслăрах пулать. Ну, вĕренсе çитсенех Лизăна юрласа паратăп. Пуçла-ха, Астрăп.

Юрлама пуçларăм çеç – сасартăк пирĕн пуç çийĕпех тăшман снарячĕ чуна хăйракан сасăпа шăхăрса иртрĕ... Хам мĕнле ӳкнине те астумастăп.

– Ан авăн, шĕшкĕ, – терĕ кулса Курмангалиев, мана хăрах хултан çĕклесе.

– Кăштах çилĕ вĕрнипе, – хушса хучĕ Ворончихин, тепĕр хулран тытса.

Калама çук вăтанса, тарăхса кайрăм. «Мĕнле-ха капла салтак ятне яратăп!» Ӳкнĕ чух çурăм хыçĕнчи катушкăсем аяк пĕрчисене самаях тĕрĕслерĕç, çапах та йынăшассăм-тăвассăм пулмарĕ: «Ан парăн, батыр!» – терĕм хама хам шăла çыртсах.

Çитрĕмĕр полка. Пире çитерчĕç те кантарĕç тесеттĕм. Кĕтсех тăр! Полк штабĕнче пире уйрăм заданипе тӳрех батальона ячĕç. Курмангалиев коммутатор умĕнче ларса юлчĕ, эпир Викторпа батальона кайрăмăр.

Батальон командирĕ малти траншейăрах вырнаçнă. Окопсенче салтаксем мăкăртатса калаçни илтĕнет. Пирĕн умрах – нимĕç хули.

Каç пулнăранпа чылай вăхăт ĕнтĕ. Çанталăк сивĕтрĕ.

– Ну, Петенька, фашистсем чăрмантарман чух кăшт çывăрса илер-ха. Кун пек лăпкă каç сайра хутра çеç пулкалать, – тет Виктор.

– Çывăхра блиндаж пур-им? – тетĕп.

– Мĕнле блиндаж? – кулать тусăм, – траншея тĕпне çапă саратпăр та – çывăрма мамăк тӳшек çинчи пекех çемçе пулать. Пĕр-пĕрин çумне çурăмпа выртсан – кăмака çумĕнчи пек ăшă.

Чăнах та, фронтовик ĕшеннĕ шăм-шакне çапă купи çинче те кантарма пултарать иккен, анчах ку «ырлăх» вĕри кăмака çумĕнче киленсе выртнинчен урăхларах-мĕн... Çĕрĕпех шăнса аптрарăм. Виктор ман пĕрре те нăйкăшмасть, шӳтлесе кăна выртать. Хăйĕн те шăлĕсем шаккаççĕ, çапах та шӳт тăвать. Пулаççĕ те çав вутчулĕ пек çирĕп чунлă çынсем!.. Ир енне çеç кăшт тĕлĕрсе кайнăччĕ – Курмангалиев сасси вăратрĕ.

– Эй, Петĕр-батыр! Çиме тăр, курсак пуш-пушах пуль-ха сан?

– Курсакĕ пирки мĕн калăн ĕнтĕ! Çур талăк ытла пĕр тĕпренчĕк те ăша илмен, – тет Виктор атă кунчинчен кашăк кăларса.

Фронтовикăн та хăйне май телей пурах çав: çĕрĕпех ĕнтĕркесе выртнă хыççăн котелока чĕркуççи çине лартса траншейăра вĕри яшка çимешкĕн мĕн тери аван иккен!

– Астрăп, сана Лизăран питĕ пысăк салам, – терĕ Курмангалиев ытарлăн куç хĕссе.

Çăкăр татăкĕ кăшт çеç пыра лармарĕ ман.

– Мĕн терĕн?!

– Çи, çи! Салам каларĕ тетĕп. Полк штабне апатпа пычĕ те пĕрехмай сан çинчен ыйтать.

– Ан тĕлĕнтер! Вара мĕн?

– Мĕн вара? Тӳр сăмахăн кукри çук. Петĕр чăн-чăн батыр пек çапăçать, терĕм. Хĕпĕртерĕ. Саншăн савăнать пуль ĕнтĕ, унсăр мĕнле хĕр салам калатăр?

– Пĕтертĕн пуçа, Курман!

– Тăшман пуçĕ пур çинче мĕншĕн сан пуçна пĕтерес? Пулăшрăм сана, пĕтермен. Юрататăн ху ăна, анчах пĕлтерместĕн... Эпĕ чăнлăха çеç хисеплетĕп, çавăнпа та чăтаймарăм: Лиза, терĕм, юратать сана Петĕр, терĕм.

– Эх, курман-килмен! Мĕн шутлĕ-ха Лисук ман çинчен? Ман пекки... батальонĕпе те...

– Ан кулян, – тет Виктор. – Мĕнтен кая эсĕ ыттисенчен? Малтанлăха çеç йывăр сана, çавă кăна. Пире те малтан йывăрччĕ. Вĕренсе çитрĕмĕр ак. Сана пулăшма пурте хатĕр эпир. Иртнĕ пухура комсомолецсем сан пирки калаçрĕç; юлташсем умĕнче эпир, Курманпа иксĕмĕр, санран ăста связист, маттур связист тăватпăр тесе сăмах патăмăр. Асту, часах хамăр йыша та илĕпĕр ак...

Йăпатрĕ. Пултарать вăл çынпа чĕререн калаçма. Ахальтен мар комсорг. Малти траншейăра пĕрле выртса тăнă хушăра эпĕ ăна пушшех юратса пăрахрăм, уншăн тем тума хатĕр.

Çапла темиçе кун иртрĕ. Курмангалиев талăксерен икшер хут пирĕн пата апатпа килсе каять, кашнинчех Лисукран салам каласа хăварать. Хĕр саламĕ мана сивĕ окопра та ăшăтнăн туйăнатчĕ.

Пĕррехинче Курмангалиев апатпа килчĕ те Лисук çинчен пĕр сăмах та шарламарĕ.

– Лиза салам каламарĕ-им? – кулкаласа ыйтрĕ Виктор.

Казах ман çине пăхса илчĕ те чĕнмерĕ.

– Курмангалиев! Ан асаплантар! – тетĕп хам та чăтаймасăр. – Лисук нимĕн те каламарĕ-им?

Ирĕксĕррĕн çеç тавăрчĕ Казахстан йĕкĕчĕ:

– Каламарĕ, ыйтрĕ кăна.

– Мĕн ыйтрĕ, хăвăртрах кала! – кăшкăрса ятăм эпĕ. Чĕрем, теме сиснĕ пекех, ыратса кайрĕ.

**/Малалли пулать/.**

***САВĂ СĔВЕМĔ***

***Геннадий ЮМАРТ***

# Таринкка

*К.В.Иванова халалласа*

"Таринкқаçăм, Таринкқаçăм,
Куç илемĕ, чун уççи!
Пултăн эсĕ ирĕн-каçăн
Вутлă кăмăлăм хуçи.

Аслă ырлăх евĕр туйрăм
Хамăрăн юратăва.
Пурнăç çулĕ пулчĕ уйрăм,
Çавраймарăмăр йăва.

Сывлăх пĕтрĕ. Ăсăм-пуçăм
Сӳнĕ çывăх самантра.
Пурпĕр эсĕ, варлă тусăм,
Ялтăратăн асăмра.

Натали йыхравлăп терĕ
Таврăнмашкăн санпала.
Темшĕн, темшĕн çитеймерĕ
Аякран тăван яла".

– Ах, анне, тухса пăхсамччĕ,
Çын килмест-и ту енчен?
– Çитетех пуль, тăхтасамччĕ,
Курăнмасть-ха килекен...

Тапхăр-тапхăр вĕриленчĕ,
Шанкă пек типет Кĕçтук.
Ал-ури ун лĕнчĕр-ленчĕр,
Пуç йăтма тĕрекĕ çук.

Тĕлĕнтермĕш тĕрлĕ тĕлĕк
Ылмашать асилӳре,
Çутатать тулта хĕвелĕ
Çут çанталăк йăлипе.

"Таринкқаçăм, эс те çуттăн
Юлтăн манăн асăма.
Чи паха парне пек пултăн,
Уншăн тав кун-çулăма.

Эп хама та савăнмалăх
Парнелесшĕнччĕ сана.
Халĕ юлчĕ асăнмалăх,
Тухаймарĕ вăл чăна.

Эс пултарăн каçармашкăн,
Тĕл пулма та пултарах.
Юлашки хутчен курмашкăн
Çитейсемччĕ васкарах".

– Ах, анне, тухса пăхсамччĕ,
Курăнмасть-и Натали?
– Килетех пуль, тăхтасамччĕ,
Ним те çуккă-ха палли.

"Евĕк Натали аппаçăм,
Ман телейĕм – хӳтлĕхре.
Уççăнрах унпа калаçăн,
Ирĕклетĕн читлĕхе.

Читлĕхре иртет-çке кунăм,
Тек чĕртеймĕп сывлăха.
Натали килсессĕн чунăм
Лăш пулать самантлăха.

Наталиçĕм, евĕк евчĕ
Пултăн манăн тĕлĕшрен.
Курăймарăн, хӳтĕлевçĕ,
Ним усси те çав ĕçрен.

Тăрăшса пайтах çӳрерĕн,
Килĕшмерĕç ваттисем.
Килĕшнĕ пулсан чиперрĕн
Çитмĕччĕç вилес кунсем.

Пĕтĕм пурнăç, ĕçĕм-пуçăм
Урăхла йĕрленчĕ-çке,
Курмĕччĕ çакна та куçăм
Яшлăхăм вĕркевĕнче".

– Вĕренмен хĕрпе мĕн тăвăн?
Хут ĕçне юратмĕ те,
Ĕç-пуçу та ăнмĕ хăвăн, –
Терĕ, хăтăрчĕ атте.

– Чĕмпĕрте вĕрентĕп терĕм,
– Пулĕ вăл вĕрентекен.
– Вăхăт иртнĕ ĕнтĕ хĕрĕн, –
Терĕ çеç вара кĕскен.

– Çук ун пурлăхĕ пăхмалăх,
Кĕрĕ вăл чăматанне...
Кĕтĕ шав сире ют алăк,
Тытăр ютăн хăлăпне... –

Ак мĕн евĕр евитленĕ
Амăшĕ те Таринккан.
Хальлĕхе вăл пултăр тенĕ
Кил тавраш пуçтаракан.

"Пурччĕ манăн хĕр тата та –
Чĕмпĕрте пĕр чиперкке.
Пĕр майра – Олимпиада,
Хам çине пăхан пике.

Туйăнатчĕ пулăшасшăн
Улăхма Олимп çине:
Майĕ пурччĕ унăн ашшĕн
Кăларма мĕн çырнине.

Чăвашла пĕлмен этемшĕн
Пулĕ ман тĕнче сивлек.
Хамăр çын çапах та темшĕн
Çумра чух чуна тӳлек.

Пурччĕ, пурччĕ урăххи те,
Вăл юратрĕ теприне,
Вăл унпа туслашрĕ питĕ,
Уншăн пулчĕ чăн парне.

Пулаймарăн эсĕ – маншăн,
Эпĕ хам та сан валли.
Çакăн пек телей пулманшăн
Сăвă çеç ман памалли.

Вăрттăн-вăрттăн шăрçаларăм
Эпĕ сăвă сан çинчен.
Саншăн юлĕ пĕр çак ярăм,
Çав альбом çеç ман енчен.

Асăмра тăраççĕ чĕррĕн
Сирĕн ял вырăнĕсем –
Санпала çӳренĕ çĕрĕн
Улăхĕ-çаранĕсем.

Эс унта çуралнăран-ши
Хитререх унти кĕтес?
Е вăл вырăн чаплăран-ши
Хӳхĕмрех çиçетĕн эс?

Ĕшнере "Нарспи" вуларăм
Çамрăксем йăлăннипе.
Хушăран йăл-йăл кулайрăн
Кăмăлу çĕкленнипе.

Çирĕп кăмăл палăратчĕ
Шухăшлă куçусенче,
Аллунти сирень турачĕ
Тем чĕтретчĕ йыш çинче.

Нарспилле хастарлă туйăм
Сан виçеллĕ пуплевре.
Сан ĕçчен ална та туйăн
Çыпăçуллă пӳ-сире.

Курăнса тăрать асамлăн
Авалхи кĕпе тĕрри.
Сăнассу килет саламлăн,
Хускалать çынсен чĕри.

Эс килте те, хăнара та
Юмахри пек чиперкке.
Ялăмра та, хулара та
Пултăн илĕртмĕш пике.

Туй тума тесе чĕнсеттĕм
Чĕмпĕрти тусăмсене.
Сăнаса пăхма сĕнсеттĕм:
Килĕшсеттĕн вĕсене.

Пелепей таран мухтарĕç,
Таринккаçăм, сан сăнна.
Темиçе те тархасларĕç
Çураçас тесе сана.

Эсĕ пур – хальччен те хирĕç,
Никампа та килĕшмен.
Шухăшна пачах та сир эс,
Ĕмĕрлеймĕн пĕр-пĕччен.

**/Вĕçĕ пулать/.**

